# Мускав мар, çĕр ĕçĕ илĕртет

● 5 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР
1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

35(957) №, 2016, авăн/сентябрь, 10
Хакĕ ирĕклĕ.
16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

●Чăваш вăрманĕ миçе çултине пĕлетĕр-и? 2 стр.
●Халĕ шкула кайиччененех вулама пĕлмелле 3 стр.
●Сухан хуппи – эмел те, апат та. Юн пусăмĕ чаксан 8 стр.
●Пуçлăх хĕрĕ 9 стр.
●Чие айĕнчи юрату 10 стр.
●Пăр çинче те вĕри туйăм пулать 11 стр.

ÇĂЛТĂР ÇŮПÇИ

## Çĕнĕ клуб хута кайĕ-ши?



Лидия МАЛИНА, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ

– Чун хĕпĕртет – кăçал эпĕ вĕреннĕ ялта, Комсомольски районĕнчи Элпуçра, çĕнĕ шкул хута кайрĕ. Ас тăватăпха хамăр йывăç шкулта вĕреннине. Çуркунне-кĕркунне кўршĕ ялтан пылчăк ашса-çăрса килеттĕмĕр. Вутăпа хутса ăшăтнăран хĕл кунĕсенче сивĕччĕ.

Тăвансен, кўршĕ ачисем малашне çĕнĕ шкулта савăнса пĕлў пухĕç. Анчах та пирĕн тăван ялта, юнашарти Хирти Выçли ялĕнче, клуб ытла та кивелчĕçке. 15 çул каялла тăван ялта кирпĕчрен клуб хăпартма тытăннăччĕ, креслосем те илсе килсе вырнаçтарнăччĕ. Темшĕн ĕçе вĕçне çитерейменрĕç. Çав çурт симĕсленсе-măкланса ларни чуна ыраттарать. Унăн тăррине йывăç та шăтнăччĕ! Хирти Выçлинче çамрăк нумай, пултарулăх ушкăнĕ те пур – анчах та юрласа-ташласа савăнмалли кĕтес паян-ыран ишĕлесле ларать.

Республикăри чылай яла çитетпĕр. Темĕн тĕрлĕ культура çурчĕ те пур. Хăшĕпĕринче 15-20 çул пачах та юсав ĕçĕ ирттермен. Ертўçĕрен те чылай килет çав. Пĕр ялта пултăмăр, клубĕн алăкĕ питĕ пĕчĕк. Пушарнăйсенчен кашни çулах сăмах тивет теççĕ хăйсем – çавах пысăк алăк касаймаççĕ. Ун валли укçи-тенки нумай та кирлĕ мар-çке. Чуна парса ĕçлесен илемĕ те, йĕрки те пулать. Хам та «Нарспи» клубра тăрăшатăп, çавна май пĕрмай юсав иртте-ретпĕр: обой улăштаратпăр, зала илемлететпĕр, сăрлатпăр. Ашшĕ-амăшне, ачисене те хăтлăх кирлĕ-çке.

Хулари «Нарспи» клуба виçĕ çултан тытăнса çўреççĕ. Чăвашла ытларах калаçма тăрăшатпăр вĕсемпе. Ашшĕ-амăшне те килĕшет çакă. Нумай пулмасть «Асанне арчи» проект хута кайрĕ. Çавна май халь хулари шкулсене тухса çўретпĕр, шăпăрлансене чăваш тумĕпе, тĕрри-эрешĕпе паллаштаратпăр. Тухья-хушпупа, тевет-ум çаккипе, чăвашлăхпа çав тери кăсăкланаççĕ ачасем.

### Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 10.09 | + 14 | + 9 |
| 11.09 | + 12 | + 10 |
| 12.09 | + 15 | + 12 |
| 13.09 | + 13 | + 9 |
| 14.09 | + 12 | + 10 |
| 15.09 | + 12 | + 10 |
| 16.09 | + 12 | + 9 |




4 стр.

# Шупашкарти онкодиспансер – Раççей шайĕнче

ÇЫРĂНТАРУ – 2017

«ХЫПАРА» – КАШНИ ÇЕМЬЕНЕ

2017 çулăн I çурринче илсе тăмашкăн *авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнчен* йўнĕ хакпа: "ХЫПАРА" – 572,88 тенкĕпе, "ХЫПАР-эрнекуна" – 279,36 тенкĕпе, "ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ" хаçата 297,24 тенкĕпе çырăнтараççĕ.

Сентябрь уйăхĕн 1-мĕшĕнчен – 30% йўнĕрех

МУХТАВЛĂ ЕНТЕШ

# Асрах тытатпăр

Çĕр çинче çĕр-çĕр пин ял. Анчах та пĕринче çеç тĕнчипе паллă çын – Андриян Николаев космонавт-летчик – çуралнă. Вăл – манăн тăван Шуршăл! Шăпах çак ялта çут тĕнчене килнĕ те ĕнтĕ пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр. Çакăнта вăл вылянӑ, ем-ешĕл йăмраллă урамсем тăрăх чупса çирĕпленнĕ, аталаннă, тӳпене вĕçме ĕмĕтленсе ӳснĕ. Хăйĕн шухăшне вăл чыслăн пурнăçланă. 1962-мĕш çулта çурла уйăхĕн 11-мĕшĕнче Андриян Николаев хăйĕн карапне çеç мар, пĕтĕм Шуршăла, пĕтĕм чăваш халăхне, пĕтĕм çĕршыва тĕпсĕр уçлăха илсе хăпарчĕ, тĕнче умĕнче чапа кăларчĕ. Унăн вилĕмсĕр ĕçĕсем ĕмĕрлĕх пирĕн чĕресенче юлчĕç.

Андриян çинчен эпир, Шуршăлсем, питĕ лайăх пĕлетпĕр. Аслă ăрурисем вăл çав тери сăпайлă, чипер, ĕçрен хăраман, çынна хисеплекен çын пулнине паянхи кун та ырăпа аса илеççĕ. Ачалăхĕ йывăр килсен те вăл чăн-чăн Çын пулса ӳснĕ. Андриян Николаев космоса пĕр хутчен çеç вĕçмерĕ, икĕ хутчен Герой пулса тăчĕ. Пирĕн Шуршăла татах та çӳлерех çĕклерĕ.

Андриян – чăн чăваш ачи. Вăл хăй чăваш иккенне нихăçан та пытарман, çакă ăна тĕнче шайĕнче çĕкленме пĕрре те кансĕрлемерĕ. Хальхи вăхăтра çитĕнекенсем чăваш пуласран мĕншĕн вăтанаççĕши? Ашшĕ-амăшĕ те пепкисене пĕчĕкренех вырăса кăларма тăрăшать. Эх!.. Пирĕн ентешĕмĕртен тĕслĕх илесчĕ. Чăвашлăх çулĕпе утса тĕнче шайĕнче татах та нумай çĕкленесчĕ.

Эпир, Шуршăлсем, хамăр ентешĕмĕрпе çав тери мухтанатпăр. Мĕн тери чаплă ялта пурăнатпăр эпир! Çак юмахри пек илемлĕ ырлăхпа пире, паллах, Андриян Николаев тивĕçтерчĕ. Унăн пилĕпе, тивлечĕпе çирĕппĕн малалла утатпăр. Тавах ăна пуриншĕн те! Вăл – ĕмĕрлĕх мухтавлă чăн-чăн паттăр.

Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче – хисеплĕ ентешĕмĕрĕн çуралнă кунĕ. Эпир çав куна яланхи пекех чыслăн паллă турăмăр. Шеп те иртрĕ уяв çăлтăрлă ялта!

**А.ПЕТРОВА**.
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

«ГРАЖДАНСКАЯ ПЛАТФОРМА» — СИЛЬНАЯ КОМАНДА!

гражданская ПЛАТФОРМА +Я

Мы – команда единомышленников. В отличие от других правых партий, мы – патриоты нашей страны. Наша мечта – сделать российскую экономику такой же сильной, как наша сильная армия. Жители России должны гордиться не только нашей армией и внешней политикой. Мы должны гордиться нашей экономикой.

Выборы в ГосДуму станут для нашей партии непростым испытанием. Мы молодая партия, а 4 парламентские партии будут стремиться никого не пустить на Олимп. Но мы будем бороться! Честно бороться!

Надо брать пример с нашего президента. Благодаря его твёрдости и упорству был сломлен Эрдоган. Он извинился перед Москвой, и весь мир это признал. Или давайте посмотрим, как запад хотел нас задавить, сломать. Но не смог. Никакие санкции им не помогли. А всё благодаря твёрдой позиции и умению терпеть. Россия подобно скале выстояла. Зато Евросоюз теперь трещит по швам.

«Гражданская ПЛАТФОРМА» пришла в политику всерьёз и надолго. Мы готовы к длительной работе. Будем твёрдо, последовательно добиваться своих целей. Будем такой же скалой, как наша страна.



**Голосуйте за № 6 «Гражданскую ПЛАТФОРМУ»!**
**Поддержите нас! Вместе мы СИЛА!**

*Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «Гражданская Платформа» политика партине тӳлевсĕр панă*

ЗА ДЕТЕЙ! ЗА ВНУКОВ!
ЗА ДОСТОЙНУЮ ЖИЗНЬ!



ПАРТИЯ ПЕНСИОНЕРОВ!
ГОЛОСУЙ СЕРДЦЕМ!

*Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «Российская партия пенсионеров за справедливость» политика партине тӳлевсĕр панă*

Яблоко



Григорий Явлинский

**Сменим политику и власть вместе.**

*Уважение к личности – без этого не будет России.*

18 сентября голосуйте за Яблоко!
**№ 11** в бюллетене.

*Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «ЯБЛОКО» политика партине тӳлевсĕр панă*

ÇУТÇАНТАЛĂК

# Йывăç ӳсĕмне палăртаççĕ

«Чăваш вăрманĕ» наци паркне дендрохронологи экспедицийĕ килнĕ. Унăн йышĕнче – Раççей академи наукисен географи тата археологи институчĕсен ĕçченĕсем. Ăсчахсем вăрăм дендрошкала хатĕрлеме пуçланă. Вăл вăрăм ĕмĕрлĕ йывăç ăçта çитĕннине палăртма тата юлашки пинçуллăхра регионти çанталăк улшăнăвне тĕпчеме пулăшĕ.

Раççей академи наукисен географи институчĕн ятарлă оборудованийĕ йывăçа сиен кӳмест. Унпа пĕр-пĕринчен 100-300 метрта ӳсекен 20 йывăçа /100 çултан иртнĕ хыра, чăрăша, юмана/ тĕрĕсленĕ. Касса кăларнă вырăна пластилин сĕрнĕ.

Тĕрĕслев кăтартăвĕсене «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕн çутçанталăк летопиçне кĕртĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

КУЛЬТУРА

# Куççăррисен кĕнеке тĕнчи

Çак эрнере Лев Толстой ячĕллĕ ятарлă библиотекăра куççăррисен тата япăх куракансен кĕнеке тĕнчи тавра семинар иртнĕ. Шупашкарти вулавăшсен пĕрлешĕвĕн ĕçченĕсене «Эпир те тĕнчене хамăр майлă куратпăр», «Хăтлă хула», «Куракана валли куççăрри çинчен памятка» кĕске фильмсем кăтартнă, çĕнĕ йышши технологипе паллаштарнă.

Çакăнтах этикет йĕрки çинчен сăмах хускатнă. «Чи малтанах, сусăр çын хăйне кирек ăçта та хăтлă туйтăр, вара кăткăс лару-тăрăва лекмĕ вăл», – тенĕ куççăррисен спорт федерацийĕн ертӳçи Дмитрий Фадеев.

Юлашкинчен Шупашкарти библиотекăсен пĕрлешĕвĕн никĕсĕ çинче куççăррисем тата япăх куракансем валли ятарлă уйрăм йĕркелеме килĕшӳ тунă. Унсăр пуçне кĕнеке фондне çĕнĕ кăларăмсемпе пуянлатма палăртнă.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**




18 СЕНТЯБРЯ ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОСДУМЫ РФ

ГОЛОСУЙ

ЗА №7

ЛДПР

Пичет лаптăкне Федерацин «РФ Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен суйлавĕ çинчен» саккунĕн 66-мĕш ст. килĕшӳллĕн «ЛДПР» политика партине тӳлевсĕр панă

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Кая юлсан – каю шăтĕ

Елена АТАМАНОВА

Пĕлĕшĕм икĕ çул каялла виççĕмĕш ачине çуратрĕ. Ипотекăпа хваттер туяннă май кредит тӳлеççĕ вĕсем. Пепкипе малтанах килте вăрах лармасса калаçатчĕ. Нумай пулмасть вара ĕçе тухрĕ те ĕнтĕ. Пĕчĕк хĕрĕ садике çӳреме пуçларĕ. Черечĕ хăвăрт çитнĕ вĕсен. Халь хăюллăнах пирĕн республикăра ку енĕпе пĕр чăрмав та çук тесе калас килет.

Иртнĕ çул кăна Чăваш Енре 4 садике хута яма май килнĕ. «Ача сачĕсем – ачасене» проектпа килĕшӳллĕн юлашки çулсенче республикăра çул çитменнисем валли 21530 çĕнĕ вырăн уçнă. 2012 çулранпа кăна Шупашкар хулинче 16 ача сачĕ шăпăрлансене хăйĕн ытамне илнĕ. Ун умĕн, 20 çул хушши, шкул çулне çитменнисен пĕр учреждениййĕ те уçăлман. Паянхи кун хулара 33 пин ача садике çӳрет. Лару-тăру лайăх енне хăвăрт улшăнни савăнтарать. 2010 çулсенче еплерех çивĕччĕ ку ыйту. Килте ачапа ларма пултарĕччĕ-ха хĕрарăм, анчах та тĕпренчĕкне пăхнăшăн паракан укçапа инçе каяймăн.

Хальхи вăхăтра шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденине çӳрекен шăпăрлансен тавра курăмĕ анлă. Кунтах тĕрлĕ кружок йĕркеленине ырламалла. Чылай ашшĕ-амăшĕн ĕç хыççăн пултарулăх çурчĕ тăрăх çӳреме вăхăт сахал. Педагогсем садике хăйсемех килни пур ашшĕ-амăшне те килĕшет. Тĕпренчĕксене специалистсем ача садĕнчех аталантараççĕ. Аякка çӳремесĕр кунтах акăлчан чĕлхи те вĕренме май пур. Вулама-çырма та хăнăхтараççĕ, юрă-ташă кружокĕсем те ĕçлеççĕ, спортпа та туслаштараççĕ.

Чылай ача садĕнче пултарулăх мастерскойĕ ĕçлет. Кунта шăпăрлансем педагогсемпе тата ашшĕ-амăшĕпе пĕрле тăрăшаççĕ. Шкул çулне çитменнисем пластилинран е тăварлă чустаран теттесем ăсталаççĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. Эрне пуçламăшĕнче воспитатель кашни ашшĕ-амăшнех пултарулăх урокĕсем ирттерме кирлĕ канцеляри таварĕн списокне валеçсе пачĕ: киçтĕк, акварель, тĕслĕ кăранташ, альбом, тĕслĕ хут-картон, çилĕм, хачă тата ытти те. Иртнĕ çулхи теттесем те йăлăхтарса çитернĕ. Юмах кĕнекисем те кивелнĕ. Иртен пуçласа каçченех вăхăтне садикре ирттерекен тĕпренчĕксене çĕннисене камăн илсе парас ан килтĕр? Ачан шухăшлавне аталантаракан теттесем туянмашкăн 1 пин тенкĕ пухма тĕв турăмăр. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшне килĕшмен çакă, садик заведующине кайса евитленĕ. Воспитатель тата ашшĕ-амăшĕн комитечĕ ирĕксĕрлесе укçа пуçтарать имĕш. Ют ушкăн валли мар, хамăр ачасем валли туяннине ниепле те ăнланасшăн мар. Юсав ирттернĕ чухне те çав çынсемех айккинче пăрăнса юлаççĕ. Шел те, лава каялла сĕтĕрекенсем кирек ăçта та пур çав. Ачасене чи малтанах хамăра шанса çурататпăр мар-и? Маттур ашшĕ-амăшĕ вара пепкине тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерессишĕнех темиçе ĕçе вырнаçма та, юлашки тенкине тăкаклама та, пур йывăрлăха çĕнтерме те хатĕр.

«Ачасене садикре асаплантарма мĕне кирлĕ? Шкулта вĕрентĕç-ха, эпир пĕрремĕш класа саспалли палламасăрах кайнă, малтанхи çул патак çеç турткаласа ларнă», – çакнашкал калакансем халĕ те пур-ха аслăрах ăру хушшинче.

Пĕрремĕш класа кайиччен çырма-вулама хăнăхман ача кайран вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси иккĕленӳллĕ. Хулари шкулта ĕлĕкхи пек никам та алфавитпа паллаштармасть халь, программа тăрăх тӳрех пысăк калăпăшлă калавсем вулаттараççĕ. Пĕр минутра миçе саспалли вулама пултарнине тĕрĕслеççĕ. Пушшех те, 3-5 çулти ачасем лайăхрах та ас туса юлаççĕ. Апла пулсан пĕлӳ тĕнчипе маларах туслашни ачан пуласлăхне çирĕп никĕс хывма пулăшĕ.

# Уявсене хамăрах йĕркелетпĕр



Юратнă хаçатра хамăр ялти пурнăç çинчен çырса кăтартас килет манăн. Чăваш халăхĕ яланах хăйĕн юрри-ташшипе хавхаланса пурăннă. Пирĕн ялта та уявсене çав тери килĕштереççĕ. Анчах ялти клуба хупсан вĕсене йĕркелеме пăрахрĕç.

Халĕ пирĕн ялта ку тĕлĕшпе – çĕнĕ тапхăр. Ял халăхĕ тăрăшнипе клуб валли пӳлĕм уйăрса панă. Халĕ унта кашни уяврах пухăнатпăр. Юрласа савăнтараканнисем – шкул ачисенчен пуçласа асанне-кукамай таранах. Клуб ертӳçи те çук пирĕн. Уявсене хатĕрлеме вĕрентекенсем пулăшаççĕ. Уйрăмах Хуракасси шкулĕнче тăрăшакан Светлана Карпована тав тăватпăр.

**Елена ЕМЕЛЬЯНОВА.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

«ХĂЙНЕ ЕВĔРЛĔ АЧАСЕМ»

# Ятарлă ушкăна йышăнаççĕ

Шупашкарта тĕревсĕр, япăх илтекен, начар куракан тата ăс-тăн енчен аталанса çитеймен пепкесем валли 4 ача сачĕ уçнă. Унсăр пуçне шкул çулне çитмен ачасене йышăнакан 13 учрежденире ятарлă ушкăнсем пур. Çавнашкалах 3 лекотека, патронаж ушкăнĕсем ĕçлеççĕ. Йывăр чирлĕ ачасен тьютерсемпе çыхăнма пулать.

Юлашки вăхăтра «хăйнеевĕрлĕ ачасене» садике вырнаçтарасси йĕркеленсе кайрĕ. 2013 çулта – 729, 2014 çулта – 906, 2015 çулта 1205 ача черет кĕтнĕ. Кăçал черетре – 690 пепке. Çакă 200 ытла ачапа логопедсем ĕçленипе çыхăннă. Шкул çулне çитмен учрежденисенче 71 логопед валли хушма вырăн уйăрнине те палăртмалла. 2017 çулта логопедсен, дефектологсен штатне тата пысăклатасшăн.

Хальхи программăсем чирлĕ ачасемпе ăнăçлă ĕçлеме май параççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



# Унăн ячĕ манăçмĕ

**Авăн уйăхĕн 5-мĕшĕнче пирĕн мухтавлă ентешĕмĕр, Совет Союзĕн икĕ хут Геройĕ Андриян Николаев çуралнăранпа 87 çул çитрĕ. Çак кун Шуршăлта кашни çул савăнăçлă уяв иртет. Кăçал та Асăну комплексĕ çынсене хăнана йыхравларĕ.**

Çак кун А.Николаева асăнса йĕркелекен çăмăл атлетика ăмăртăвĕнчен пуçланчĕ. Шкул ачисем, учреждени-организаци командисем, çемьесем, ветерансем район хаçачĕн парнисене çĕнсе илессишĕн тупăшрĕç. Тĕрлĕ ушкăнра чи вăйлисемпе чи хастаррисем мала тухрĕç, вĕсене хаклă парнесемпе чысларĕç.

Космонавт çуралнă кун чăваш халăхĕшĕн чи пысăк уявсенчен пĕри шутланать. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевшăн та хаклă ентешĕмĕр – тĕслĕх вырăнĕнче.

– Андриян Григорьевич уçлăха тухса чăваш халăхĕн тата республикăн ятне çĕре çĕклерĕ. Паянхи кун чăваш пăхаттирĕн ятне пĕтĕм тĕнче пĕлет. Унăн ячĕ тÿпери çăлтăр пек çуталса тăрать. Андриян яланах малта пулнă: ача чухне те хастар, вĕренÿре те тăрăшуллисенчен пĕри, ĕçре те чунне парса вăй хунă. Пур йывăрлăха çĕнтерсе малалла утнă. Пирĕн, çамрăксен те, çитĕннисен те, унран тĕслĕх илмелле, нихăçан та пуç усмалла мар, – терĕ Михаил Васильевич.

Космонавтика музейĕ умĕнче иртнĕ савăнăçлă митинга çавăн пекех СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, Олимп чемпионки Елена Николаева, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Александр Никаноров, Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхĕ Анатолий Мясников тата ытти хăна хутшăнчĕç. Вĕсем те пухăннисене Андриян Николаев пек тăван çĕршывшăн, чăваш халăхĕшĕн тăрăшса ĕçлеме чĕнсе каларĕç.

Андриян Григорьевичăн ятне ял-йыш чыслăн упрать. Хăй пурăннă чухнех уçăлнă музей паянхи кун Асăну комплексĕ пулса тăчĕ. Халĕ унта музей çурчĕ, космонавт çуралнă пÿрт, часавай /пурте пĕлетпĕр ĕнтĕ, ентешĕмĕре унта пытарнă/ пур. Темиçе çул каялла Космонавтсен аллейине хыврĕç. Çÿлелле кармашакан чăрăшсемпе, туйăсемпе кедр йывăççисем паян парка илем кÿреççĕ. Музей директорĕ Александр Тукмаков пĕлтернĕ тăрăх – Асăну комплексне çынсем нумай килсе кураççĕ, уйрăмах ачасем килĕштереççĕ. Музейра "Çамрăк конструктор", "Çамрăк экскурсовод" тата "Астроном тата эпĕ" кружоксем ĕçлеççĕ.

Çитĕнекен ăру та А.Николаевăн ятне асра тытать. Шкулта çамрăк космонавтсен отрядне йĕркеленĕ. Шуршăл уявне кашни çул хутшăнакан Октябрьски шкулĕнчи кадетсем те космонавт пек пулма ăнтăлаççĕ, хăйсен пурнăçне спортпа тата техника профессийĕпе çыхăнтарма палăртаççĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**



# Ĕçчен çын ĕмĕр мухтавра

**Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче потребкоопераци ĕçченĕсен Раççей потребительсен кооперацийĕ 185 çул тултарнине тата Чăваш Республикинчи Ĕç çыннин çулталăкне халалланă форум иртрĕ.**

Чăвашпотребсоюз канашĕн председателĕ, Раççей Центросоюзĕн канашĕн членĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ **Валерий Павлов** форума хутшăнакансене Раççей потребкооперацийĕ 185 çул тултарнă ятпа саламларĕ, потребительсен кооперацийĕ ялти социаллă ыйтусене татса парас, ял çыннисен пурнăçне лайăхлатас енĕпе патшалăх влаçĕ органĕсен тата вырăнти хăйтытăмлăхăн тĕп партнерĕсенчен пĕри пулнине палăртрĕ.

Республика Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** форума пухăннисене ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунчĕ. "Кооператорсем хăйсен ĕçне пысăк яваплăхпа пурнăçлаççĕ, яланах халăхпа юнашар пулма, унăн ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерме тăрăшаççĕ, – терĕ вăл. – Чăвашпотребсоюз, унăн организацийĕсем Раççейре çулсерен чи лайăххисен шутĕнче пулнине мăнаçланатăп. Паян ялпа хула хушшинче уйрăмлăх çук. Республикăна килнĕ хăнасем те райпосен лавкки-кафисенче пулса курнă хыççăн çакна кашниннех палăртаççĕ. Ялти кооператорсем хальхи технологисемпе, оборудованипе пĕлсе усă курни, çĕнĕлĕхсене çул пани курăмлă аталанса пыма май парать. Малашне те çитĕнÿсем тума ырă сунатăп».

Кооператорсене уявпа РФ Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕн членĕ Вадим Николаев, РФ Патшалăх Думин Вĕренÿ енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕн заместителĕ **Алена Аршинова,** ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн заместителĕ **Николай Малов**, республикăн муниципалитет пĕрлĕхĕсен правленийĕн председателĕ **Леонид Черкесов** саламларĕç.

Савăнăçлă лару-тăрура професси ăсталăхĕн республикăри конкурсĕн çĕнтерÿçисене тата кооперации организацийĕсен лидер пултарулăхĕпе палăрнă ертÿçисене тĕрлĕ номинацире чысларĕç.

**Алина ЛУКИЯНОВА.**

ВИЗИТ

# Шупашкарти онкодиспансер – Раççей шайĕнче

**Раççей сывлăх сыхлав министрĕ Вероника Скворцова Чăваш Енре ĕçлĕ визитпа пулчĕ. Республика Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă хыççăн тĕп хулари сиплев учрежденийĕсене уçма хутшăнчĕ.**

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Алькеш поселокĕ юлашки çулсенче ÿссе, сарăлсах пырать, кунта пурăнакансем те кунран-кун йышланаççĕ. Микрорайонта пурăнакансене çывăхра больница çукки самаях пăшăрхантаратчĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсен ĕмĕчĕ тулчĕ: Болгарстрой урамĕнчи 11-мĕш çуртра 1-мĕш хула клиника больницин 2-мĕш пĕтĕмĕшле тухтăр практикин уйрăмĕ тата Шупашкарти 3-мĕш ача-пăча больницин ачасен поликлиники уçăлчĕ.

– Микрорайонта пурăнакансем малашне инçе каймасăр тата вăхăтра пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илме пултарĕç, – терĕ республика Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** çак ятпа йĕркеленĕ уява уçнă май. – Çынсем ыйтнипе çак çурта туянтăмăр, юсарăмăр, хальхи йышши медицина оборудованийĕпе тивĕçтертĕмĕр. Куншăн федераци министерствине тав тăватпăр. Вĕсем пирĕн пĕр ыйтăва та тимлĕхсĕр хăвармаççĕ, палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме пулăшса пыраççĕ.

Раççей сывлăх сыхлав министрĕ **Вероника Скворцова** Чăваш Республикинче медицина вăйлă аталаннине, хăшпĕр кăтартупа вара çĕршывра малтисен йышĕнче пулнине палăртрĕ:

– Республикăра вăрăм ĕмĕрлĕ çынсем йышланса пыраççĕ, пĕчĕк ачасем сахал вилеççĕ. Ку енĕпе регион Европа çĕршывĕсемпе тата Японипе танлашма пултарать. Çакă пĕтĕмпех – медицина ĕçченĕсем хăйсен тивĕçĕсене пысăк яваплăхпа пурнăçланин ырă çимĕçĕ. Çĕнĕрен уçăлнă çак учрежденисенче те чи ăста специалистсем ĕçлессине шанатăп.

Вероника Скворцова медицинăна аталантарма нумай вăй хунăшăн Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева уйрăммăн тав турĕ.

– Пысăк тав, сывлăх сыхлавĕн тытăмне çеç мар, ку тытăмри кашни ĕç-хĕле, медицинăра вара, паллă ĕнтĕ, вак-тĕвек çук, сăнаса тăнăшăн, – терĕ вăл. – Регион ăнăçлă аталанать, кунта пысăк технологиллĕ медицина пулăшăвĕ параççĕ, йывăр чирсене пуçламăш тапхăрта тупса палăртаççĕ, ăнăçлă сиплеççĕ.

Хĕрлĕ хăйăва касса поликлиникăна уçнă хыççăн делегаци сиплев учрежденийĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕ. Поликлиникăна 8 пин çын çырт. Талăкра çитĕннĕ 280 пациента, 100 яхăн ачана йышăнма палăртаççĕ. Таса та çутă пÿлĕмсенче тухтăрсене ĕçлеме кăна мар, чирлисене те килсе çÿреме хăтлă. Васкавлă пулăшу, массаж, процедура, УЗИ пÿлĕмĕсем… Пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвĕ пама мĕн кирли йăлтах пур кунта.

Чăваш Енре иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчех шыçă чирĕсене сиплеме пуçланă. Çитмĕл ытла çул хушшинче онкологи службы аталанса çирĕпленнĕ. Хальхи вăхăтра республикăри диспансер пысăк квалификациллĕ онкологи пулăшăвĕ паракан сиплев учрежденийĕ шутланать. Ĕнер сиплев учрежденийĕн ултă хутлă хирурги корпусĕ уçăлчĕ.

– Шыçă чирĕсене ăнăçлă сиплесси, медицина ĕçченĕсене ĕçлеме тивĕçлĕ условисем туса парасси çинчен сахал мар шухăшланă. Федераци программине хутшăнтăмăр. Тавах Раççей Президентне Владимир Путина, федераци министерствине. Вĕсен пулăшăвĕпе çак учреждение хута яма 363 миллион ытла тенкĕ уйăрчĕç, – хирурги корпусĕн строительствине пуçарнă вăхăта аса илнĕ май пĕлтерчĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Вăл çавăн пекех çитес вăхăтра операцисен шучĕ ÿсессине, çавна май чирлисене вырăнта ытларах пулăшу пама май пулассине, çынсен пурнăçĕ вăрăмланассине, ачасем Раççей медицини вăйлине шанса çитĕнессине палăртрĕ.

Çĕнĕ уйрăм ĕçĕ-хĕлĕпе онкологи диспансерĕн тĕп тухтăрĕ **Лидия Воропаева** паллаштарчĕ. Ку корпусра онкохирургин виçĕ уйрăмĕ йĕркеленĕ. Операци пÿлĕмĕсене видеохатĕрсем вырнаçтарнă. Вĕсем пулăшнипе Н.Н.Блохин ячĕллĕ Раççей онкологи ăслăлăх центрĕн специалисчĕсемпе çыхăнса йывăр чирлĕ пациентсем тĕлĕшпе канашлама, çавăн пекех хирурги енĕпе ăсталăх класĕсемпе вĕренÿ проекчĕсене йĕркелеме май килет.

Раççей министрĕ Вероника Скворцова онкологи чирĕсене «алăра тытса тăма» вĕренсен медицина аталанăвăн чи çÿллĕ картлашки çине хăпарнине çирĕплетнине палăртрĕ. Вероника Игоревна Чăваш Енри онкологи службин специалисчĕсем ку енĕпе курăмлă ĕçленине пĕлтерчĕ, вĕсен ĕçне пысăк хак пачĕ:

Раççей Федерацийĕн Правительствин йышăнăвĕпе иртнĕ кунсенче Чăваш Республикине реанимобиль килнĕ. ЧР сывлăх сыхлав министрĕ **Алла Самойлова** çитес вăхăтра тата 12 автомобиль килессине пĕлтерчĕ. Пĕрремĕш васкавлă пулăшу машинин уççине РФ сывлăх сыхлав министрĕ Вероника Скворцова водителе парнелерĕ.

…Шыçă чирĕпе асапланакансене тата диспансерта ĕçлекенсене малашне тÿперен Пирĕшти хăват парса тăрĕ. Владимир Нагорнов проекчĕпе туса хатĕрленĕ çак скульптурăна çĕнĕ хирурги корпусĕ умне вырнаçтарнă. Авторсен шухăшĕпе вăл тухтăрсемпе медсестрасен чун-чĕрине хÿтлĕх туйăмĕпе тултарĕ, чирлисене йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшĕ.

**Валентина БАГАДЕРОВА.**

Василий КУЗЬМИН сăнÿкерчĕкĕ



**Вероника СКВОРЦОВА, РФ сывлăх сыхлав министрĕ:**
**– Регионăн медицина тытăмĕнчи кăтартăвĕсем мана туллин тивĕçтереççĕ. Шыçă чирĕсене тупса палăртасси 20-23 процент лайăхланнă, малтанхи тапхăрта тупса сиплесси 53-54 процент ÿснĕ. Кунта пациентсен пысăк пахалăхлă медицина пулăшăвĕ илес шанăçĕ питĕ пысăк. 2018 çул тĕлнелле шыçă тĕрлĕ чирĕпе кĕрешме таргет терапине ĕçе кĕртме палăртнă. Малашне ядерлă медицина аталанăвне çул парасшăн. Ку ыйтупа Инçет Хĕвелтухăçĕнче пултăм. Çĕршывра çак тĕллевпе икĕ-виçĕ лапам кирлĕ. Чăваш Енĕн те ку енĕпе инноваци лапамĕ пулма майсем çителĕклĕ.**

МАТТУРСЕМ!

# Мускав мар, çĕр ĕçĕ илĕртет

– Çак урампа Вăтаел çулĕ таран кайăр, кăвак тĕслĕ хитре хапха тĕлĕнче чарăнăр, – Еливановсем ăçта пурăннине кăтартса ячĕç сак çинче кĕр ăшшипе киленсе ларакан кинемисем.

Хиртен тин çеç таврăннă Иванпа Марина типĕтме сапаласа тăкнă суханăн хура вăрлăхне /чечекли/ васкасах пăтрататчĕç. Çур куна уйра ирттернĕскерсен килтĕрĕшре ытти ĕç те нумай çав.

7 гектар çĕр çинче çĕрулми, сухан, кишĕр, вырăс кăшманĕ, хĕрлĕ кăшман, вăрлăх сухан çитĕнтернĕ вĕсем. Техника енчен чăрмав çук Еливановсен, çавăнпа та акма-сухалама çынна укçалла тара тытмалла мар. Трактор-машинăна вырнаçтарма çу кунĕсенче пысăк гараж хăпартнă. «Çĕр ĕçне хăнăхнă ĕнтĕ, пире, хĕрарăмсене нимех те мар, арçынсене йывăр лекет. Юр ирĕлсе пĕтсе тепре çумасăр та хиртен таврăнса кураймаççĕ. Темĕн тĕрлĕ техника кирлĕ, вĕсене пăхсах тăмалла. Халь ав упăшка сухалама хатĕрленет. Ĕçе 10 сотка çĕртен пуçăннă эпир. Нумай пулмасть çеç фермер хуçалăхĕ йĕркелерĕмĕр. Ĕмĕтсем çунатлă та пысăк», – паллаштарать Марина Ивановна.

Чăн та, паттăр та пуян пулас, хитре пурăнас тесен чылай тар тăкмалла. Çĕр тăрантарать кăна мар, ир те кас вăй хурса ĕçлесен тупăш та кÿрет. Çакна Патăрьел районĕнчи Тури Тусасем уйрăмах лайăх пĕлеççĕ. Кунта чылайăшĕ вăрлăх сухан акать, сутмалăх та туса илет. Вăрлăха утă уйăхĕн вĕçĕнчех типĕтсе пухса кĕртнĕ ĕнтĕ. Хĕл каçарма ятарлă условисем кашнинех пур. Еливановсем кил картинче управ вырăнĕ хатĕрленĕ. Унта температура йĕркине, сывлăш нÿрĕклĕхне тĕрĕслесех тăраççĕ. Халь те вентилятор çутнăччĕ. «Пахча çимĕç хакĕ йÿнĕ, унран пысăк тупăш илме çук. Çу каçипе пилĕк авсан вăрлăх суханăн усси вара пурах. Çĕнĕ çул хыççăн ăна ялах килсе илеççĕ. Ав трактор туянтăмăр, управ вырăнĕ хăпартрăмăр. ГАЗеле те сухан сутнă укçапах илнĕ. Ку тăрăхри çамрăксем те питĕ маттур. Юлашки вăхăтра Мускав мар, çĕр ĕçĕ илĕртет вĕсене», – каласа кăтартать Марина.

Ăш пиллĕ кил хуçи арăмĕ хăйĕн çемйипе те паллаштарчĕ.



Марина пулас мăшăрĕпе кÿршĕри Вăтаелĕнче, хĕр тантăшĕ патне хăнана килсен тĕл пулнă. Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕнче çуралнă, кайран Чулхулара çитĕннĕ пике сакăр класс хыççăн Шупашкарти пир-авăр комбинатне килнĕ. «Хулара нумай та ĕçлеймерĕм, ĕçчен те тăрăшуллă Патăрьел каччи тыткăна илчех, яла пăрахса килтĕм. Уншăн пĕрре те ÿкĕнместĕп халь. Малтанах чăвашла нимĕн те пĕлместĕмччĕ. «Вырăсла калаçса мана сутса яратăр-и-ха, нимĕн сисмесĕрех юлăп», – тетчĕ хуняма. Çине тăрса чăвашла хаçат-журнал, кĕнеке нумай вуласах тăван чĕлхене вĕрентĕм. Халь Тусасем пекех калаçатăп», – ăшшăн кулать Марина. Мăшăрĕпе пĕрле икĕ ывăл ÿстернĕ вĕсем. Асли Дима çемьеллĕ, ашшĕ-амăшĕнчен пĕр кил урлă çурт туяннă. Çамрăк мăшăр хулара пăртак пурăнса пăхнă хыççăн каялла яла пăрахса килнĕ, çĕр ĕçнех суйласа илнĕ. Вĕсем те ашшĕ-амăшĕн çулĕпех утаççĕ. Кĕçĕнни Сергей Тури Тусари 9-мĕш класра вĕренет. Ашшĕнчен ниçта юлманскер сывăх çыннине кил-тĕрĕшре пулăшать.

Кил хуçипе Иванпа пĕртăван Анатолий, Владимир та ку ялтах тĕпленнĕ, вĕсем те тăрăшсах çĕр çинче вăй хураççĕ. «Вăрлăх сухана пуçтарса кĕртме пирĕн пата 100-120 çын таранах килет. Кинпе е упăшка тăванĕсемпе пĕрле апат пĕçеретпĕр, хире илсе кайса çитеретпĕр. Çĕрĕ пысăк, çынна пулăшма чĕнмесĕр ниепле те май çук. Вăрлăх сухана çуллахи вăхăтра пĕр хутчен çумланипех çырлахатпăр. Çанталăк лайăх тăчĕ кăçал, пухса кĕртме çумăр чăрмантармарĕ. Сухан шăтса тухсанах Çĕнĕ Ахпÿртре пăр çуса кайрĕ, пире унăн «хÿри» çеç лекрĕ, нимĕн те сиенлемерĕ», – чунне уçать кил хуçи арăмĕ.

Тури Тусара Еливановсене хисеплеççĕ. Ял тăрăхĕнче те вĕсем пирки ырăпа кăна калаççĕ. Çак чыса вĕсем ĕçченлĕхпе тăрăшулăхне, тирпейлĕхне кура çĕнсе илни куçкĕрет.

**Елена АТАМАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕ.

ÇЕМЬЕ

# Вăрттăн ĕмĕт самантрах пурнăçланнă



**Етĕрне районĕнчи Мăн Яваш вăтам шкулĕнче уроксем пĕтнĕччĕ, вĕрентекенсемпе вĕренекенсенчен чылайăшĕ киле саланма ĕлкĕрнĕччĕ. 5-мĕш класри Ксения Бобровăпа унăн амăшĕ те шкул картишне васкамасăр тухрĕç. Хĕвеллĕ çанталăкра вĕсем чылайччен уçăлса çÿреççĕ, таврари илемпе киленеççĕ. Кÿмери хĕрача ыттисем асăрхаман хăйне евĕрлĕхе те сăнама хăнăхнă.**

**«Анне, ыран шкула килетпĕр-и?» – ыйтать сусăр хĕрача. Унăн, паллах, тантăшĕсемпе хутшăнас килет. Тата тавракурăмне анлăлатасшăн вăл. Çитĕнсе çитсен сиплевçĕ пуласшăн. Ксения мана чăвашла та, вырăсла та, акăлчанла та калаçса кăтартрĕ. «Ниçта çухалса каймăн эсĕ», – хăпартлантаратăп ăна. Вăл шурă шăлĕсене кăтартса кулать. «Ах, утас килет...» – те чупса çÿрекен ачасене курса кăмăлĕ улшăнчĕ унăн? Çапах та Ксения тунсăхласа лараканнисен йышĕнчен мар. Утайман хĕрача кашни вак-тĕвекшĕнех савăнма пĕлет.**

### Шкулшăн тунсăхлани

Вĕренÿ çулĕ пуçланасса чăтăмсăррăн кĕтнĕ Ксения Боброва. «Етĕрнере çĕнĕ çи-пуç туянтăмăр. Юбка та, сарафан та пур манăн», – тет хавхаланса хĕрача. Асра юлнă çав кун класс ертÿçине пысăк чечек çыххи парнеленĕ вăл. Сăнатăп та, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче кăна мар, ытти кун та шкула килни уяв пекех уншăн.

Вĕрентекенсем ăна ытларах пĕлме ăнтăлнăшăн мухтаççĕ. «Вăл урокра та ыйтусем парать. Пуçланă ĕçе яланах вĕçне çитерет. Историпе, çутçанталăк пулăмĕсемпе кăсăкланать, пластилинпа аппаланма юратать. Кăмăлĕ çирĕп унăн», – палăртать 4-мĕш класра вĕрентнĕ Анна Яковлева. Вăл Бобровсем патне киле те тăтăш çÿренĕ.

Яккушкăнь Мăн Яваш çумĕнчех вырнаçнă, çавăнпах Бобровсене кÿмепе шкула çÿреме йывăрах мар. Çанталăк пăсăлсан çеç çула тухма кансĕр.

### Качака сĕчĕ юратать

«Урама тухайманшăн питех кулянмастăп. Мана килте те хăтлă. Эпир атте-аннепе пытанмалла вылятпăр. Алăк е чаршав хыçĕнче ларсан та час тупаймаççĕ мана. Хăш чухне кĕтсе ывăнатăп та сасăпах кулма пуçлатăп», – калаçăва тăсать Ксения.

Николай Сергеевичпа Татьяна Ивановна 4 ача çуратнă, Ксения – чи кĕçĕнни. «Ултă уйăхра, аталанса çитейместĕрех, çут тĕнчене килчĕ вăл. Çуралсанах диагноз палăртрĕç – ДЦП. Висĕ хут операци сĕтелĕ çине выртрĕ вăл. Çулленех висшер хут реабилитаци центрĕнче сипленетпĕр», – тет амăшĕ. Пĕчĕк Ксюшăна аппăшĕпе пиччĕшĕсем пăхма пулăшнă. Халĕ те кĕçĕннине парне парсах тăраççĕ. Çавăнпах Бобровсен килĕнче пукане, тетте нумай.

Ксения юлташĕсене çав тери кĕтет. Вĕсемпе, паллах, вăхăт иртни те сисĕнмест. Пиччĕшĕн ачисемпе – 8-ти Генăпа тата 2-ри Викăпа – выляма юратать вăл. Кирлех пулсан – вĕсене ăса та вĕрентет. «Вика кăткăласан та касса кайсах кулатăп», – нимĕн те пытармасть хĕрача. Вăл пуринпе те хăйне тивĕçлĕ тытма пĕлет.

Бобровсен вырăх нумай. Ксюша, сăмахран, качака сĕчĕ юратать. Унсăр пуçне кил хуçисем пахчаçимĕç ситса тупăш илеççĕ.

«Ксения хăй тĕллĕнлĕхе хăнăхса пырать. Тĕслĕхрен, телевизор çутать, телефонпа шăнкăравлать. Уншăн та хĕпĕртетпĕр», – ăнлантарать Татьяна Ивановна. Ксюша телефон номерĕсене пăхмасăр пĕлет. Кăмăлĕ пусăрăнсан Васкассине качча тухнă аппăшĕпе Людмилăпа çыхăнать вăл. Кулленхи пурнăç тавра калаçу пуçарать унпа, 9 уйăхри тĕпренчĕкĕ пирки ыйтса пĕлет.

Бобровсем çул çÿреме юратаççĕ. Ксюшăна Шупашкара цирка та, театра та илсе килеççĕ. Район, ял уявĕсене те пысăк йышпа тухаççĕ вĕсем.

### Чечек парнеленĕ

«Юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче 11 çул тултаратăп. Çуралнă куна тăвансемпе кăна мар, тантăшсемпе те уявласчĕ. Пурте пĕрле пысăк торт касса çийĕпĕр. Пылак çимĕçе пурте юратни паллă, çапах та торт çинчи çуртасем çуннă вăхăтра ĕмĕтĕм пурнăçланма ыйтни пĕлтерĕшлĕрех маншăн», – тарăн шухăша путса ăнлантарать Ксения. Ыррине шанни, кĕтни те вăй парать ăна. Ахальтен мар юмах тĕнчинче хăйне хăтлă туять вăл. Мультфильмри юрăсене пĕлет. Пушă вăхăтра илемлĕ фильмсем курать, унти ĕç-пуса тăванĕсемпе сÿтсе явать.

...Хĕлле сусăрсене Етĕрнери ача-пăча пултарулăх çуртне пуçтарнă. Унта чи вăрттăн ĕмĕте хут çине çырма ыйтнă. Ксюша хĕрлĕ кĕлчечек парнелессе кĕтнине пытарман. Йĕркелÿçĕсем çав самантрах лавккана тухса чупнă, кăштахранах хĕрлĕ чечекпе Ксюшăн кăмăлне уçнă.

Юрлама юратакан хĕрача сцена çине тухасшăн. Реабилитаци центрĕнче ĕçлекенсем ăна концерт программине кĕртме шантарнă. Паллах, ун чухне те хĕрлĕ кĕлчечексем парнелĕç ăна. Ксения куракансене пултарулăхĕпе кăна мар, йăл куллипе те тыткăнлĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕ.



### АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

#### Консервланă пылак пăрăç



2-3 килограмм пылак пăрăç кирлĕ.

**Маринад валли 1 литр шыв пуçне 70 грамм сахăр, 35 грамм тăвар, 8 грамм лимон йӳçекĕ хатĕрлемелле.**

Вăрринчен тасатнă пылак пăрăça 2-3 минутлăха вĕрекен шыва ямалла, кăларсан сивĕ шывпа çумалла. Пахчаçимĕçе хăю майлă касса çур литр банкине тултармалла. Вĕри маринад ямалла. Банкăсене 12-15 минут стерилизацилесе хупмалла.

#### Лечо

**3 килограмм помидор, 5 кишĕр, пуçлă 5 сухан, 5 пылак пăрăç, 1 стакан сахăр, 1 стакан тип çу, 2 апат кашăкĕ тăвар, 1 апат кашăкĕ 70 процентлă уксус эссенцийĕ кирлĕ.**

Помидора аш арманĕ витĕр кăлармалла, кишĕре теркăламалла, сухана çурма çаврашкан турамалла. Çак çимĕçсене 45 минут пĕçермелле. Пĕрчĕлесе туранă пылак пăрăç хушсан тепĕр 15 минут вĕретмелле. Юлашкинчен уксус ямалла. Стерилизациленĕ банкăсене вĕрилле тултармалла.

#### Панулмипе пылак пăрăç салачĕ

**Консервланă 1 банка куккурус, 2 панулми, 2 пылак пăрăç, 300 грамм сыр кирлĕ. Соус валли 150 миллилитр йогурт, 1 апат кашăкĕ сар пăрăç, 1 апат кашăкĕ пыл, майонез хатĕрлемелле.**

Пăрăça, панулмие, сыра тăваткалласа турамалла. Йогурта майонезпа, сар пăрăçпа, пылпа хутăштармалла. Çимĕçсене соуспа пăтратмалла.

#### Купăстапа, хăярпа

**200 грамм купăста, 200 грамм краб патакĕ, 1 хăяр, пуçлă 1 сухан, 1 пылак пăрăç, консервланă 0,5 банка куккурус, 0,5 банка симĕс пăрça, майонез кирлĕ.**

Сухана – çурма çаврашкан, купăстана, краб патакне, хăяра, панулмие – пĕрчĕлесе, пăрăça тăваткалласа турамалла. Çимĕçсене майонезпа пăтратмалла, тăвар сапмалла.

#### Какай хутăшĕ

**300-шер грамм сысна, пăру, чăх какайĕ, пуçлă 2 сухан, 400 грамм кăмпа, 2 кишĕр, 50 грамм сыр кирлĕ.**

**Соус валли 2-шер апат кашăкĕ хăйма, майонез хатĕрлемелле.**

Тăваткалласа туранă какая тăвар, пăрăç сапса ылтăн тĕс çапиччен ăшаламалла. Вĕттĕн каснă сухана, теркăланă кишĕре пăшăхламалла. Кăмпана пĕçерсе ăшаламалла.

Фольга çине сийлесе /пăру какайĕпе кăмпа – сысна ашĕпе сухан – чăх какайĕпе кишĕр/ хăпартмалла. Майонезпа хăйма хутăшне çиелтен ямалла. Теркăланă сыр сапмалла. Какай хутăшне духовкăра пĕçермелле.

#### Пулăпа çĕрулми

**Шăмминчен тасатнă 1 килограмм пулă, 0,5 килограмм çĕрулми, 250 миллилитр шĕвĕ хăйма, 1,5 апат кашăкĕ сар пăрăç, тăвар, пăрăç, тип çу, укроп кирлĕ.**

Хуппинчен тасатнă çĕрулмие çаврашкан турамалла, тăвар сапса çатмана хумалла. Ăна пулă татăкĕсемпе хупламалла. Çиелтен шĕвĕ хăймапа сар пăрăç хутăшĕ ямалла. Пулăпа çĕрулмие 30-40 минутлăха духовкăна лартмалла. Пиçсен вĕтетнĕ укроп сапмалла.

#### Шăккалат пасти

Эмаль савăтра **5 апат кашăкĕ сахăра 5 апат кашăкĕ какаопа, ванилинпа** пăтратмалла, **5 апат кашăкĕ сĕт** хушмалла. Çак хутăша вăйсăр çулăм çинче вĕреме кĕртмелле, унтан **50 грамм услам çу, 1 чей кашăкĕ çăнăх** хушмалла.

Шăккалат пастине **мăйăр, хĕвелçаврăнăш вăрри** яма юрать. Ăна сивĕтмĕшре упрамалла.

#### Курага çаврашки

**1 стакан сĕлĕ хăрпăкĕ, 50 грамм услам çу, 0,5 стакан курага, авăртнă корица, 2-3 апат кашăкĕ шĕвĕ пыл, 1-1,5 стакан сĕт, 100 грамм аçтăрхан мăйăрĕ кирлĕ.**

Сĕлĕ хăрпăкне услам çупа ăшаламалла, курага, корица, пыл, сĕт хушмалла. Çак хутăшран çаврашкасем тумалла, кашнине уйрăммăн вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрĕпе йăваламалла. Курага çаврашкисене 1 сехетлĕхе сивĕтмĕше лартмалла.

### ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

## Хурлăхан лартатпăр

**Хурлăхана хăçан лартсан лайăхрах-ши: кĕркунне-и, çуркунне-и? Кĕркуннехи тĕмсем хĕлле ан пĕтчĕр тесен мĕн тумалла?**

**И.МАТВЕЕВ.**

Вăрнар районĕ.



Хурлăхана кĕркунне те, çуркунне те лартаççĕ. Çапах та кĕркунне лартса хăварни лайăхрах. Хурлăхана çулçă тăкăннă хыççăн куçармалла. Хĕллечен тĕмĕ таврашĕнчи çулçă лайăх пусăрăннипе хурлăхана сивĕ тивеймĕ, çуркунне хăвăртрах вăй илĕ. Ăна усăрах вырăна, хăйăрлăрах çĕре, лартсан аванрах.

## Кĕрхи ĕçсем

**Пулса çитнĕ пахчаçимĕçпе улма-çырлана пухса кĕртесси – кĕрхи тĕп ĕçсенчен пĕри. Çак тапхăрта панулми, груша татса хумалла. Малтан – кĕрхи сортсене, унтан – хĕллехисене. Чи кирли – çимĕçе вăхăтра пухмалла: пиçсе çитеймесĕр татнă çимĕç япăх упранать, хăвăрт шанать, кая юлса пухни те пахалăхне çухатать.**

Упрама сывă, аманман çимĕçе суйламалла. Улма-çырлана çанталăк çумăра кайиччен тата шăнтиччен кĕртмелле. Панулмипе грушăна асăрханса тунипе татмалла.

**Çырла пахчи.** Авăн уйăхĕнче çĕр çырли лартмалла. Çанталăк сивĕтиччен хăмла çырли тунисене пайласа çыхмалла, çĕр çумне пусарса хумалла.

**Йывăç ан шăнтăр.** Çанталăк уярсан йывăç вуллине шуратмалла. Çамрăк тĕмсене кĕлпе апатлантарни аван. Çимĕç паман ытлашши хунавсене касни йывăça çирĕплене май парĕ.

Кĕрхи çулça йывăç айĕнчен ан пуçтарăр, çакă органика им-çамĕ вырăнне пулĕ, тымарне сивĕрен хупĕ.



### СЫВЛĂХ

## Юн пусăмĕ чаксан

**Юн пусăмĕ пĕчĕк чухне çыннăн пуçĕ çаврăнма, ыратма тытăнать, вăйĕ чакать, кăмăлĕ пăтранать, сывлама йывăрланать, куç кураслăхĕ япăхланать, чĕре тапни туйăнать, ӳчĕ те тăтăшах сивĕ, çыпăçать. Тонометр юн пусăмне пĕрмай 90/60 кăтартни – гипотони палли. Çакă тĕртĕмсене, чĕрепе пӳрене юн сахал çитнине пĕлтерет. Ку вара питĕ сиенлĕ. Юн сахал çаврăннăран пуç мими те хавшать – ăна кислород çитмест. Юн пусăмĕ пĕчĕккренех инсульт та пулма пултарать.**

**Çын хăйне çакнашкал япăх туясси организма шыв çитменнипе, нумай вăхăт вырăнпа выртнипе, апат çителĕксĕр çинипе, юн чакнипе, чĕре е неврологи чирĕсемпе асапланнипе, ача кĕтнипе çыхăнма пултарать. Юн пусăмне хăш-пĕр эмел те чакарать. Вĕсен йышĕнче – альфа-адреноблокатор, бета-блокатор, шăк хăвалаканнисем, пусăрăнчăк кăмăла уçаканнисем. Юн пусăмне йĕркене кĕртме халăх медицининче сĕнӳ чылай, анчах вĕсемпе сиплениччен тухтăрпа канашламалла, юн пусăмĕ мĕншĕн чакнин сăлтавне тупма тăрăшмалла. Çав вăхăтрах гипотони паллисене çăмăллатакан канашсемпе кашниех усă курма пултарать.**

**1. Тăварлă шыв.** Тăварти натри юн пусăмне хăпартать. Анчах та ку минералпа асăрханулă пулмалла, ытлашши чухне вăл сывлăхшăн сиенлĕ. 1 стакан шывра çур чей кашăкĕ тăвар ирĕлтерни те çителĕклĕ.

**2. Кофе.** Кофеинлă шĕвек – кофе, вĕри шăккалат, кока-кола – ĕçни юн пусăмне вăхăтлăх та пулин хăпартать.

**3. Исĕм.** Касхине 1 стакан шыва 30-40 исĕм çырли ямалла. Ирхине çырлана выçăлла çимелле. Шывне те ĕçме юрать, анчах кун пек чухне çырлана лайăх çума ан манăр. Ку мелпе 3-4 эрне усă курмалла.

**4. Базилик** С витаминпа, магнипе, калипе, пантотен йӳçекĕпе пуян. Унсăр пуçне вăл пусăрăнчăк кăмăла та çĕклет. 10-15 çулçăран сĕткенне пăрмалла, 1 чей кашăкĕ пыл хушса ирсерен выçă хырăмла ĕçмелле. 4-5 çулça чăмлама та юрать.

**5. Пылак тымар** /солодка/ та юн пусăмне йĕркене кĕртме пулăшать. Вăл кортизола аркатакан фермента тытса чарать, адреналина виçере тытать. Пылак тымар пĕрмай вăйран кайнине те ирттерет. 1 стакан вĕри шыва 1 чей кашăкĕ тымар ямалла. Темиçе кун ĕçмелле.

**6. Хĕрлĕ кăшман сĕткенĕ.** Хĕрлĕ кăшманăн чĕрĕ сĕткенĕ юн пусăмĕ пĕчĕк чухне те, пысăклансан та паха. Гипотони чухне пĕр эрне хушши кунне икĕ хутчен пĕрер стакан сĕткен ĕçмелле.



**7. Миндальпе сĕт.** 5-6 мăйăра çĕр касма шыва ямалла. Ирхине хуппине сӳсе тӳмелле, сĕтпе пĕçермелле, кашни ир ĕçмелле.

**8. Розмарин.** Кунне 10 миллилитр настой ĕçмелле. Тин хатĕрленĕскерне апата техĕмлĕх пек хушмалла. Эфир çăвĕне усă курнă чухне ăна сăмса тутри çине 3-4 тумлам тумлатса 10-15 минут сывламалла.

**9. Кишĕр сĕткенĕ.** Куна пыл /1 стакана – 2 чей кашăкĕ/ хушнă кишĕр сĕткенĕнчен пуçласан юн пусăмĕ пирки манма та пулать. Унпа иркаç выçă хырăмла сăйланмалла.

**10. Лимон сĕткенĕ.** 1 стакан шыва 1-ер чей кашăкĕ ломон сĕткенĕ, тăвар, сахăр ярса ĕçни кĕлетке вăй-халне вăратма пулăшать. Çавăнпах пӳре те ĕçлеме пуçлать. Çакă вар-хырăмшăн та паха.

Гимнастика тумаллине те ан манăр.

### ЧЕЧЕК ЮРАТАКАНСЕНЕ

## Хăçан акмалла?

**Кĕркунне акса хăварнă чечек лайăх çитĕнет, тĕрлĕ чир-чĕре парăнмасть, çанталăк улшăнăвне те лайăх чăтса ирттерет. Çакă вăхăта та перекетлет: çуркунне ĕç нумай-çке.**



Кĕркунне мĕнле чечек акмалартма юрать-ха? Пĕр çул ӳсекеннисенчен: бархатцы, утмăл турат, резеда, космея, настурци, амарант, дельфиниум, маттиола, мăкăнь, адонис, алиссум, астра, гвоздика, годеци, календула, кларкия, лаватера, лобуляри, львиный зев, флокс, хризантема.

Икĕ çул ӳсекеннисенчен: маргаритка, гвоздика, виола.

Нумай çул ӳсекеннисенчен: шăнкрав куракĕ, примула, гвоздика, астра, прострел, аквилеги, лаванда, бузульник, гайларди, гейхера, гипсофила, дельфиниум, дицентра, люпин.

## Сухан шывĕ

**Чечексене сухан хуппинчен хатĕрленĕ техĕмлĕ шĕвекпе шăваратăп. Ăна хатĕрлеме питĕ ансат.**

Эмаль савăта пĕр ывăç сухан хуппипе 1,5 литр вĕри шыв ярса 5-7 минут вĕретмелле, 2 сехетрен сăрăхтармалла. Унпа ӳсен-тăрана тата тăпран çиелти сийне сирпĕтмелле. Ку чечексене тĕрлĕ чир-чĕртен сыхлама та пулăшать. Пӳлĕмре ӳсекенисем ăна апатлантару вырăнне те йышăнаççĕ. Икĕ уйăхра пĕрре туса ирттеретĕп ку ĕçе. Тепĕр чухне – тăтăшрах та.

Микроэлементсемпе пуянран кунашкал апатлантару пӳлĕмрисемшĕн çеç мар, пахчара ӳсекен чечексемшĕн те паха. Анчах çакна асра тытмалла: шыва кашнинчех çĕнĕрен хатĕрлемелле, киввипе усă курмалла мар.

**ТАТЬЯНА.**



АСАИЛӲ

# Чунăмра халь те ăшă



Пĕрле вĕреннĕ хĕрсемпе тĕл пулсан студент çулĕсене аса илсе хырăм тытсах кулатпăр. Йывăр, укçа-тенкĕ енчен хĕсĕкрех пулин те хаваслă пурăннă ун чухне. Шăп 91-мĕш çулсенче килнĕ эпир тĕп хулана. Ялтан ниçтах тухса курманскерсем мулкачран та хăравçăрах пулни паллă-ха. Мĕлке те чĕрĕ пек туйăннă ун чухне. Çав инçĕшне тата аттеанне мĕнле кăларса янă-ши? Аслăраххисем лайăх астăваççĕ, самана хăрушла пăтраннă вăхăтчĕ. Укçи пур – япали çук. Тантăшăма пӳлĕмре тăхăнма халат кирлĕччĕ, çур хула çаврăнтăмăр хайхискерсем, кайран тĕп суту-илӳ çуртĕнчен аранах пĕр тĕссĕрскерне тупса илтĕмĕр. Талонпа çын пуçне çур кило сахăр илессишĕн виçшер сехет черетре те тăрса курнă эпир. Кĕрпимакаронне те çавнашкалах туяннă. Канфет-печени тути-масине те маннă вăл вăхăтра. Эй, мĕн каламалли, шампунь тавраш̆е те çукчĕ, епле пыйтланман-ши?

Пĕррехинче экзаменран кĕшĕлтетсе çитрĕмĕр. Ирхине шыв та ĕçмесĕр тухса кайнăскерсен хырăм хыр тăрринех хăпарма ĕлкĕрнĕ. Манна кĕрписĕр пуçне шкапра урăх нимĕн те çук пирĕн. Мĕн пурринчен пăтă пĕçерсе çиме шухăшларăмăр. Халĕччен ку апата пĕри те хатĕрлесе курман. Шыв сиксе вĕреме пуçласан кĕрпене кастрюле чăмтартăмăр. Ак хайхи, кумалякланчĕ те ларчĕ. «Кивелнĕ кĕрпи, управ вăхăчĕ иртнĕ, пăрахмалла ăна», – тет тантăшăм. Шăп çав вăхăтра Зоя аппа вахтерша çӳлти хута хăпарнă та кулкаласа пăхса тăрать. Шеллерĕ пулмалла пире, сĕт, услам çу илсе килчĕ, тутлă пăтă пĕçерсе пачĕ.

Халь кулăшла та, вăл çулсенче Патăрьел-Елчĕк каччисем тесен сехре хăпатчĕ. Аслă шкултан таврăнсанах алăка шăкăр-шакăр питĕрсе илеттĕмĕр те шăши пек чĕтресе ларатт̆ăмăр пӳлĕмре. Вĕсем те хамăр пекех выçă пулнă-ши, апат çиме килетчĕç общежитие. Пĕрле вĕренекенсен алăкĕсене çĕмĕрсе кĕни те асрах. Тутартан килнĕ хĕр тусăмпа кухньăра çĕрулми ăшалатпăр хайхи. Тăрук пиллĕкмĕш хута пĕр ушкăн хашлатса хăпарчĕ. «Хĕрсем, апат çиетпĕр-и?» – çатмана уçса тĕрĕслемесĕр чăтаймарĕ чи самăрри. Ун чухне мода пулнă-ши, пурте симĕс тĕслĕ спорт шăлаварĕпе çӳретчĕç. Пĕринчен тепри вĕтĕччĕ хайсем. Мĕншĕн ӳсеймен-ши, килте çитермен мар ĕнтĕ? «Симĕс йĕмлисем» теттĕмĕр вĕсене хамăр хушăра. Апат пиçессе сыхласа тăратчĕç хăйсем. Кайран пĕрин хыççăн тепри пӳлĕме кĕшĕлтетсе кĕретчĕç, çанă тавăрса çиетчĕç те тухса каятчĕç. Çăкăрне, кашăк-чашăкне хăйсемех шыраса тупатчĕç. Чĕнме юраман – чăмăркка лекет. Пĕри яланах: «Хĕрлĕ мăй мĕн иккенне пĕлетĕр-и?» – тесе хăрататчĕ. «Хĕрачи, эсĕ хăш район?» – ку ыйту пилĕк çул хушшинче хăлхана йӳçĕхтерсех çитерчĕ. Суйма тăрсан çавах тытатчĕç, эпир унти ял çыннисене палламастпăр-çке. Мана хĕрсем «Кӳчекрен» тесе калама вĕрентнĕччĕ. Шăмăршă тăрăхĕнчи пĕчĕк яла «симĕс йĕмлисем» хайсем те лайăх пĕлместчĕç.

Пĕррехинче çатмара çĕрулмипе какай питĕ тутлăн пăсланса пиçетчĕ. «Симĕс йĕмлисем» сунара çитиччен хăвăртрах янтăласа пӳлĕме тарса кĕме шухăшланăччĕ. Урама шăршă тухнă-ши, пĕр эшкер таçтан йăтăнса та анчĕ. Тутисене çуллакаласа тутлă шарккăва кухньăрах çиреç. Каллех выçă юлтăмăр, ун пек тĕслĕх мĕн чухлĕ пулман-ши?

Тутарстан хĕрачи Нина тăван тăрăхне каймассерен тĕтĕмленĕ салă илсе килетчĕ. Техĕмлĕ шăрши коридора сарăлнă пуль çав. Кăшт çеç тутанса юлтăмăр, «симĕс йĕмлисем» алăк уçасса кĕтсе тăнă-ши, тахăш вăхăтра сирпĕнсе кĕчĕç те шкапри салăна илсе те тарчĕç. Чăваш паллă çăлтăрĕсенчен пĕрин хырăмĕ яланах выçăччĕ, е кĕлентĕршушкă, иçĕм çырли ыйтатчĕ манран. Унран та хăранă çав вăл вăхăтра, çăвартине те кăларса тыттарма хатĕрччĕ. «Патăрьел-Елчĕк тăрăхне нихăçан та каччатухас çук», – чĕтресе те йĕрсе ларатчĕç пӳлĕмри хĕрсем.

... Унтанпа 25 çул çитрĕ. Пĕрле вĕреннисемпе кăçал тĕлпулу ирттертĕмĕр. Хĕрсем мăшăрĕсемпе килчĕç уява. Пĕр пӳлĕмре пурăннисем пурте Патăрьел-Елчĕк кинĕсем пулса тăни чăннипех те кулăшла. Аслă шкултан вĕренсе тухнă хыççăн хăрани иртсе кайнă апла. Ватта юлнă Надя та нумай пулмасть савни тупнă, унăн тусĕ те анатри чăвашах.

Çатмана çап-çутă çутатнисĕр пуçне ытлах кӳрентернине астумастăп. «Эй, хĕрачи, шкул пĕтернĕ-и эсĕ, аçу-аннӳ епле кăларса янă-ха сана е аппусене курма килнĕ-и?» – тетчĕ пĕри пĕрмай. Пĕчĕк те имшерккерех пулнăран, пачах та сăрланманран çавнашкал курăннă-ши эпĕ? Шелленĕ-ши вăл мана, общежитие çитсен пирĕн пӳлĕм алăкне уçатчĕ те йăмăкĕ вырăнне хурса кӳрентерекен тупăнсан хăйне калама ыйтатчĕ. Чылай çул иртрĕ унтанпа, сахал мар шыв-шур юхрĕ, эпĕ те тахçанах çемьеллĕ, хĕрĕмсем те ӳссе çитĕнчĕç, Патăрьел чăвашĕ вара паянхи кун та асран тухмасть. Чĕрĕ-сывахши çав çын? Апла-и, капла-и, çапах та тин çеç вĕренме килнĕскерне тăван йăмăкĕ вырăнне хурса хӳтĕлени халь те чунăма ăшăтса тăрать.

**АЛИНА.**
Шупашкар хули.

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Пуçлăх хĕрĕ

«Пурпĕрех манăн пулать вăл», – пурте илтмелле каларĕ Лира ташă каçĕнче Алешăна курсан. Анчах ял хуçалăх предприяти ертӳçин пĕртен-пĕр хĕрне мар, унăн кӳршине куç хыврĕ çамрăк специалист. Лира вара унран пĕр утăм та хăпасшăн пулмарĕ: ташша чĕнчĕ, ăсатса хăварма ыйтрĕ. Алексей хирĕçлеймерĕ. Эрнеренех Лирăн капкăнне лекнине сиссе те юлаймарĕ каччă.

Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕ хăнана кайнăччĕ ун чухне. Çавăнпа усă курса Лира савнине чей ĕçме киле чĕнчĕ. Хаклă хăна умне эрех те кăларса лартрĕ вăл. Хĕрпе каччă çĕрлеччененех сĕтел хушшинчен тухмарĕç. Унтан пĕрлех сывăрма выртрĕç.

«Кĕрӳ килнĕ-çке», – шӳтлесерех калаçрĕç ир енне таврăннă хуçасем. Алексей васкасах кил енне утнине çынсем те курчĕç.



Кĕр мăнтăрĕпе чаплă туй кĕрлерĕ ялта. Çамрăк мăшăр валли хăтлă çурт хăпартса пачĕç. Çулталăккран Лира йĕкĕреш çуратрĕ. Тĕпренчĕкĕсене ача садне вырнаçтарсан бухгалтерсен курсĕнче вĕренчĕ вăл. Ашшĕ хуçалăх правленийĕнче хĕрĕ валли уйрăм пӳлĕм хатĕрлерĕ.

Ачисене ашшĕ киле илсе каякханччĕ. Çав кун садике çитиччен Алексей арăмĕ патне кĕрсе тухма шухăш тытрĕ. Алăка шалтан питĕрни сисчĕвлентерчĕ ăна. Уçма ыйтрĕ – арăмĕ итлемерĕ. Тапсах уçрĕ арçын алăка. Шалта арăмĕ хыпалансах тумланать-мĕн. Çак тăрăха килнĕ çамрăк тепĕр специалист чӳречерен сикме ĕлкĕрнĕ.

Çемье саланчĕ. Лира пĕр ачипе хулана тухса кайрĕ. Тепĕр пепкине Алексей илсе юлчĕ. Юрату иртсе кайнипе сăлтавларĕ çакна хĕрарăм.

Вăхăт нумаях та иртмерĕ, Алексей Лирăн кӳршипе мăшăрланчĕ. Унăн малтанхи арăмĕ те урăххине тупнă, тепĕр хут амăшĕ пулма хатĕрленет.

«Шăпа санпа пулма çырнă мана», – яланах çапла калать Алексей арăмне хыттăн ыталаса. Тен, чăнах та пĕр-пĕрин валлиех çуралнă вĕсем? Çакна тӳрех ăнланса илеймен.

**Лира ЛЕВОЧКИНА.**

АХ, АНЧАХ...

# Куç курать те шăл витмест

Ĕçе вырнаçнă кăначчĕ ун чухне. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче арçынсем паллашмалла пирĕн пӳлĕме кĕме пуçларĕç. Ăçта, кампа, мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлчĕç. Ара, ĕçтешсенчен мĕн пытармалли пур? «Эх, хваттерлĕ каччă тупасчĕ, вара çын патĕнче пурăнмалла пулмĕччĕ», – терĕм хайхи арçынсенчен пĕринпе чей ĕçсе ларнă май. Такам туртрĕ мана чĕлхерен. Тĕрĕссипе, качча тухма та палăртман. Пенси çулне çитекенскерĕн куçĕ йăл-ял çиçсе илчĕ. Çав самантра сĕтел çинчи канфета тыттарчĕ, ыталама хăтланчĕ. Эпĕ çухалса кайрăм. Тĕртсе ярас – ӳксе шăммишаккине хуçĕ. Кайран хамах явап тыттарĕç.

«Мана арăм пăрахса кайрĕ. Атя, пĕрлешĕпĕр. Общежитире хама ятăн пӳлĕм пур», – сĕнчĕ вăл. Вăт, тĕлĕнтерет! Кур-ха, çамрăккипе çемье çавăрасшăн. Анчах мана ватă упăшка кирлĕ мар. Тем каламалла ăна? Тӳрех хирĕçлес – кӳренĕ. Вăл мана ĕçре пулăшса пырасса шаннăччĕ.

Ĕçтешĕн кăмăлĕ нихçанхинчен лайăххине туятăп. Ахăртнех, мана хăйĕн арăмĕ вырăнĕнче курать. «Пирĕн килте хĕрарăмăн арçын сăмахĕнчен иртме юрамасть. Çак йĕркене авалтанах тытса пыратпăр», – тӳрех вĕрентме пуçларĕ хайхискер. Каччă иличченех алла илесшĕн вăл мана. Патша пекех тытать хăйне. Манăн вара чура пулас килмест. Çитменнине, патшасем общежитири хĕсĕк пӳлĕмре мар, хăтлă керменте пурăнаççĕ.

Сăмах çыпăçманнине кура ĕçтешĕм ыранччен шухăшласа пăхма сĕнчĕ. Чăнласах мăшăрланасшăн-ши манпа? Урăххине тупаймастăп тет-ши? Шăлĕ вităймесрен те шикленмест. Пĕр чĕптĕм те юратмастăп эпĕ ăна. Чим, вăл мана савать-ши? Иккĕленетĕп. Общежитири пӳлĕмпе, ахăртнех, никама та илĕртеймĕн.

Ăна пулах йĕркеллĕ çывăраймарăм. Çитменнине, апат анми пулчĕ, пуç ыратма пуçларĕ.

Тепĕр кунхине ĕçтешĕм ир-ирех çитсе кĕчĕ. Пӳлĕмри çынсем илтесрен коридора чĕнсе кăларчĕ мана. Тĕрĕссипе, ăна кусĕнчен пăхма та аванмарлантăм. «Çĕрĕпе шухăшларăм. Сана качча тухаймастăн», – терĕм хăюлланса. Вăл вăрах тăмарĕ, çаврăнса утрĕ. Нивушлĕ хăпрĕ манран?

Çакăн хыççăн пĕрле чей ĕçмен, çемье çавăрасси пирки калаçман. Кăштахран вăл урăх ĕçе куçрĕ. Ăнсăртран тĕл пулсан сывлăх сунса иртетпĕр. Пулнииртнине, паллах, манма тăрăшатăп.

Эпĕ тахçанах çемьеллĕ, ача-пăчаллă. Хамăрăн хваттерте пурăнатпăр. Каччă тухма ыйтнă ĕçтешĕм çаплипех пĕччен. Общежитири пӳлĕмĕнчех выртса тăрать. Çапах мĕншĕн пĕр ӳсĕмрине шыраман-ши вăл? Тен, унпа телей тупĕччĕ? Е килте арçын сăмахĕнчен иртме юраманни килĕшмен-ши хĕрарăмсене? Халĕ çемьере арăмĕпе упăшки пĕр тан правалллă. Çакна шута илмесĕр те телей тупаймĕ пĕччен арçын.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

Анатолий КИБЕЧ



# Юлашки çыру

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерсенче/.

– Ют çĕрте çапăçасси çăмăл мар пуль çав. Аслă лейтенант каланă тăрăх, душмансем сăрт çумĕнчи кашни сукмака пĕлеççĕ тет. Фанатиксем вĕсем, алла автомат тытсан çемйине те манса каяççĕ. Пирĕн пек мар вĕсем. Эпир ав инçетре те ачамăрсем çинчен шухăшлатпăр. Кусемшĕн пĕртен-пĕр хуçа – Коран. Аллах хушнипе çапăçаççĕ тет. Шел, питĕ шел, Юрккасем хатĕрленнĕ çапăçу ăнăçлă иртмен çав. Пирĕннисем мĕнле хатĕрленнине лешсен çыннисем душмансене пĕлтерме ĕлкĕрнĕ. Вара вĕсем икĕ ушкăна пайланса пĕлекен çулпа сăртсем çине хăпарса каяççĕ те çĕр варринче пирĕннисене тапăнаççĕ. Çавăнта пуçне хунă Юркка – хăйне лăпкăн тытма тăрăшса каласа пачĕ Сантăр.

– Юркка вилнех-ши вара вăл? – ыйтрĕ тимлĕн итлесе ларакан Маруç аппа.

– Вилнĕ çав, Маруç, вилнĕ. Хамăр масарах пытартăмăр вĕт-ха.

– Юркках пулчĕ-ши вара вăл?

– Çавах ĕнтĕ, Маруç. Килĕшме тиветех. Чăтса ирттермеллех çакна, урăхла май та çук. Маруç, пĕччен мана та йывăр, килех пыратăн пуль. Тухтăр мĕнле шухăшлать-ши?

Психиатр шăпах çак сăмахсене кĕтнĕ те ĕнтĕ. Чирлине ыран больницăран кăларма шантарчĕ.

Тепĕр кунне Сантăрпа Ира пырсан Маруç киле хаваспах пуçтарăнчĕ, Юркка ятлă кушакне те пĕрлех илсе кайрĕ.

КУЛЬТУРА

# Чăваш сцени çинче – Вырăс балечĕн театрĕ

Иртнĕ вырсарникун Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче Вырăс балет театрĕн гастролĕ вĕçленнĕ май гала-концерт иртрĕ. Раççей тĕп хулинчен килнĕ артистсен пултарулăхĕпе паллашма урамра кĕрхи çумăр пĕрĕхни чараймарĕ – залра пушă пĕр вырăн та çукчĕ. Мускавсемпе пĕрле сцена çине пирĕн театр солисчĕсем те, пĕтĕм тĕнчери конкурссен лауреачĕсем Анна Серегина, Алексей Рюмин, Анастасия тата Дмитрий Абрамовсем, тухрĕç. Çакă тӳрех кăмăла çĕклерĕ – тĕп хуларан килнисенчен пирĕннисем нимпе те кая мар! ЧР халăх артисчĕсене Татьяна Альпидовскаяна тата Айдар Хисамутдинова, куракана «Иные. Право на любовь» спектакль сыпăкĕпе тыткăна илнĕскерсене, тăвăллăн алă çупса сцена çинчен вăрахчен ямарĕç. Чăваш патшалăх операпа балет театрĕн тĕп режиссерĕ, илемлĕх ертӳçи Ольга Нестерова ертсе пыракан симфони оркестрĕ залра ларакансене çак кун Чайковский, Минкус, Асафьев, Прокофьев, Римский-Корсаков тата Глазунов кĕввисен ытарайми тĕнчине илсе çитерчĕ.

«Щелкунчик», «Золушка», «Раймонда», «Умирающий лебедь», «Дон Кихот» – балет классикин произведенийĕсем. Çавăн пекех Вырăс балет театрĕн артисчĕсем хальхи хореографипе те паллаштарчĕç. «Гала-концертра хамăр пултарулăха кăтартни – пирĕншĕн телей, мĕншĕн тесен эпир пĕрмай спектакльсенче ташлатпăр, концертсене вара сайра-хутра çеç лекетпĕр. Тĕслĕхрен, 150 гастроль номерĕнчен çурри – «Лебединое озеро», тепĕр 75-шĕ – «Щелкунчик», «Спящая красавица», «Ромео и Джульетта», «Золушка», – паллаштарчĕ Вырăс балет театрĕн солистки Людмила Титова хореограф.

Куракансем чăваш сцени çине пĕрремĕш хут тухнă Сергей Скворцова уйрăмах ăшшăн кĕтсе илчĕç. Вăл пирĕн ентеш, Каçал тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ. Сергей пултарулăхне хаклама ялтан амăшĕпе кукамăшĕ те çитнĕччĕ. «Çывăх çыннăмсем мана ĕнер сцена çинче пĕрремĕш хут курчĕç. Паллах, савăнчĕç, хĕпĕртенипе куçĕсем те шывланчĕç. Эпĕ те пăлхантăм. 16 çултанпа пĕрмай гастрольте çӳренĕрен çак тарана çитсе аннен спектакль пырса курма ниепле те май килмерĕ. Унăн ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ. Акă пĕр кĕтмен çĕртен телей – тăван тăрăхра эпĕ», – йăл кулать Сергей Скворцов. Вырăс труппин артисчĕсемпе пĕрле ăна «Шахерезада», «Щелкунчик», «Спящая красавица», «Дон Кихот» сыпăкĕсенче курса савăнтăмăр. Пĕр кун маларах, шăматкун, вăл «Ромео и Джульетта» произведенири тĕп партие выляна. Мускав хăнисем Чăваш Енпе сывпуллашнă хыççăнах Мексикăна, Европăна гастроле тухса каяссине пĕлтерчĕç. Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче вара авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче «Спящая красавица» спектакльпе çĕнĕ сезон уçăлать.

Елена АТАМАНОВА.

Лидия САРИНЕ

# Чие айĕнчи юрату

Юбилейра пулма тӳр килчĕ. Аякри тăвансем, Çĕмĕрлере пурăнакансем, хытă чĕнчĕç те, каймасан аван мар. Аякра паллах. Пĕр енне каймашкăн кăна виç çĕр тенкĕ ытла тухса ӳкет. Хăнана ахаль кайма аван мар. Ĕçме-çиме, кучченеç, хаярри, укçи-тенки. Тата пули-пулми тăхăнса каяймастăн-çке çын умне. Тăван-пĕтене те хисеплемелле. Капăр тумпа курăнас килет. Эп çынни çавнашкал. Хама та, çынсене те хисеплетĕп. Çĕнĕ пушмак, костюм, шĕлепке туянтăм. Машинăпах лартса кайрĕç тăвансем.

Ĕçке-çике çӳреме шутсăр кăмăллатăп эпĕ. Чимха, ăçтан, кам урлă тăван лекетчĕç-ха Çĕмĕрлери хурăнташсем! А-а-а, аса илтĕм... Манăн йыснан арăмĕпе пĕр варта выртнă шăллĕн хреснамăшĕн хĕрĕпе пĕр тăван аппăшĕн ывăлĕ.

Эпир пынă чухне халăх пӳрт тулличчĕ. Пурте ташлаççĕ. Четвĕрт çĕклесех чупса тухрĕç пире курсан. Ĕçтермесĕр кĕртсе ямаççĕ. Мĕн тăвас тетĕн, йăли çавнашкал. Юрă-кĕвĕ «на всю катушку» кĕрлет. Пире тӳрех, алăкран кĕricчченех, черкке айне турĕç тесен те юрать. Ну, савăннă вара. Ĕçсен мана çын чараймасть, ларма-тăма пĕлместĕп. Такмакри евĕрех. «Литр çурă ĕçер-и те метр çурă сикер-и!» – тесе ташланине ас тăватăп-ха. Эпĕ хусах. Манăн арăм та, парăм та çук... Çамрăклах уйрăлнă та. Тек авланас темерĕм. Эп капла та начар пурăнмастăп, ĕç укçи кăна мар, пенси те илетĕп.

Вăйлă ташлакана асăрхакансем пулнах ĕнтĕ. Уçăлма тухрăмăр пĕр майрапа пĕрле. Сад пахчинелле, чиесем айне, мĕн тума кĕрсе кайнă?! Ас тумастăп. Хĕрарăмпа кайни темех мар-ха, хăйне хисеплекен кашни арçынах ку утăма тума пултарать. Ним начарри те çук. Куншăн хĕпĕртемелле анчах. Питĕ хĕпĕртенĕ пулмалла çав. Чиесем айĕнче татах ĕçтернĕ мана. Пĕрлех шаккаса ĕçнĕ пек те ас тăватăп. Шăпчăксем татах хавхалантараççĕ. Шăпчăксен сассине хитре майра ытамĕнче итленĕ чух юмахри пек туйăнчĕ – эпех-ши ку? Хама чăн-чăн арçын пек туйрăм... Ухмаха тухса кайнă тейĕн. Кунашкаллине ĕмĕтленмен те юлашки вăхăтра. Майра çийĕнчи кĕпине пĕррех! туртрăм, кăкăрĕ тĕлĕнчен. Ĕçсен эпĕ ашкăнчăкрах çав. Сăвăс пек ĕмсе лартнине те ас тăватăп. Вăл мана шакла пуçран чуп тăвать, сăрăллă тутипе. Нихçан илтмен ачаш сăмахсем илтрĕм вĕт! «О-о! Мой çизокрылый пацан...» – тет. Эпĕ, çак сăмахсене илтнипе савăннăскер, пĕтĕм мулăма кăларса патăм çав каç. Пĕр пенси пĕтрĕ ĕнтĕ. Пĕттĕр-иç! Сатту ĕмĕр асра юлчĕ. Хам ĕмĕрте чие тĕмĕ айĕнче юрату курманччĕ-ха.

Ирхине кайăк сассипе вăранса кайрăм. Хырăмран пĕр кăтки çыртса илчĕ, тепри шурă нуски тăрăх чупать. Сивĕпе те мухмăрпа чĕтретĕп. Çире нимĕн те çук, урари шурă нускисĕр пуçне. Халь манăн садран тухса тăвансем умне мĕнле куçпа курăнас? Пĕрре – калама çук савăннă, тепре – çын мĕн каласран кулянатăп. Мĕнле майра пулчĕ ку? Эпĕ ăна капла та укçа панă, япаласене мĕн тесе çаратса каяс? Чунсăрскер! Этем мар! Пуçа кăтăрт! кăтăрт! хыçатăп. Нуски вĕççĕн чие тĕмĕсем айĕнчен упаленсе тухрăм. Ун-кун вырăнсене аллăмпа хупларăм. Адам пек. Ева ăçта-ши? Хĕвел ăшăтма пуçларĕ. Кайăксем ирхине тата хитре юрлама тытăнчĕç. Анчах ман чуна кайăк сассисем илĕртмеççĕ халĕ. Кама мĕн усал турăм эпĕ?! Чаплă тумланнăччĕ, саркалансах ташларăм-ха... Майри те ытла çепĕçчĕ. Укçашăнах мана çапла астарчĕ-ши? Ытлашши хытă савăннă-мĕн. Анне калатчĕ çав, ытлашши савăнсан кайран кулянмалла пулать тесе. Вăрçса, тарăхса ла-а-артăм çапла пĕр кана. Вăт, шан хальхи майрасене.



Пуçа пĕксе кулянса лараканскер сасартăк çӳлелле пăхрăм та – турат çинче хамăн тумтир питĕ тирпейлĕн çакăнса тăнине курах кайрăм. Унтах çĕнĕ пушмакăм та выртать! Эй, ниçта кайса кĕрейми савăнтăм. Чун кĕрсех кайрĕ. Йăпăр-япăр тăхăнтăм. Хăвăртрах кĕсьесене тĕрĕслетĕп. Пурте хăй вырăнĕнчех. Нимĕн те çухалман. Укçи-тенки, телефонĕ, сăмса тутри те пулин – пурте кĕсьерех. Фу! Сăмса çине тапса тухнă тара шăлатăп. Шитă-критă. Вçо йĕркеллĕ. Майра та йĕркеллĕ çынах пулнă иккен. Садран тухнă чух куç хăех хама телей кӳнĕ чие тĕмĕсем айне пăхрĕ. Никам куриччен хам тĕллĕн кулса илтĕм, пахчаран васкамасăр кăмăллăн утса тухрăм.

Уяв малалла тăсăлчĕ. Лайăх та иккен пурнăç каçхи шăпчăксем юрланă чух.

АСĂМРИ ЮРĂСЕМ

## Шак-шак шаккарĕç кантăкран

*Станиславпа Верония Толстовсем юрлаççĕ*

Шак-шак-шак шаккарĕç кантăкран,
Кантăка эп уçрăм васкаса.
Чĕремре халь пит йывăр суран,
Хурлăх килсе кĕчĕ ыткăнса.
Хурлăх, ма суйларăн эс мана?
Эп сана чĕнменччĕ хăнана.
Мĕншĕн-ши эс хуçрăн кăмăла?
Тăрăшса лăскарăн чунăма.
Хурлăх, ма суйларăн эс мана?
Эп сана чĕнменччĕ хăнана.
Мĕншĕн-ши эс хуçрăн кăмăла?
Тăрăшса лăскарăн чунăма.

Шак-шак-шак шаккарĕç алăкран,
Алăка эп уçрăм тăхтаса.
Ман шăпам кулатăн пуль манран?
Инкек килсе кĕчĕ ыткăнса.
Инкек, ма суйларăн эс мана?
Эп сана чĕнменччĕ хăнана.
Мĕншĕн-ши эс хуçрăн кăмăла?
Тăрăшса лăскарăн чунăма.
Инкек, ма суйларăн эс мана?
Эп сана чĕнменччĕ хăнана.
Мĕншĕн-ши эс хуçрăн кăмăла?
Тăрăшса лăскарăн чунăма.

Кантăка хупмастăп юриех,
Çут хĕвел ташлатăр хĕм сапса.
Алăка та уçрăм яриех,
Кĕр, телейĕм, ан тăр вăтанса.
Телей, ман телей, ăçта çӳрен?
Мĕншĕн-ши вăрах эс кĕттерен?
Шанчăка çухатмăп эп пĕрех,
Ман пата эс çитĕн пурпĕрех.
Телей, ман телей, ăçта çӳрен?
Мĕншĕн -ши вăрах эс кĕттерен?
Шанчăка çухатмăп эп пĕрех,
Ман пата эс çитĕн пурпĕрех.

**Рубрикăна Чăваш наци радиовĕн ĕçченĕ Ирина ЛАМПАСОВА тытса пырать.**

# Сергей Гриньков тата Екатерина Гордеева – юрату историйĕ

**Сергей Гриньков пурнăçĕ пĕтĕмĕшпех – юрату историйĕ. Шел те, унăн вĕçĕ телей кӳмен юратакан чунсене. Çак историе, çитменнине, тĕп геройсем хăйсемех каласа кăтартнă. Сенкер экранпа. Хитре, çутă, чаплă истори, анчах та – питĕ кĕске.**



### Пурнăç пĕр сукмакĕпе

1967 çулхи нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнче çуралнă Сергей Гриньков, хăй те пĕлмесĕр, 1981 çулччен кӳршĕ çуртра пурăнакан хĕрачапа, хăйĕнчен тăватă çул кĕçĕнрехскерпе, пурнăç сукмакĕпе пĕрле утнă. Вĕсем пĕр шкулах – 704-мĕшне – çӳренĕ, анчах та пĕр-пĕрне палламанпĕлмен. Пăр çинче илемлĕ эрешсем туса ярăнас енĕпе те пĕр секциех çӳренĕ, анчах та кунта та темшĕн вĕсен çулĕсем хĕресленмен. Сергей пиллĕкре, Катя виçĕ çулта чухне уйрăм карьера тума ăнтăлнă.

1981 çулта иккĕшĕн те уйрăм карьера ăнăçмасси уçăмланнă – кирлĕ чухлĕ çӳллĕ сикеймеççĕ. Çавăнпа вĕсене паллаштарнă – çапла пулса иртнĕ пĕрремĕш тĕлпулу. Хăйсемшĕн кăна мар, каярахпа тĕнчешĕн пĕлтерĕшлĕ пулса тăнăскер. Хĕрача çав вăхăтра 10 çулта пулнă, арçын ача – 14-ра. Анчах та çамрăксенчен пĕри те çакна, паллах, тĕлленме те пултарайман – вĕсене пĕрлештерекенни кĕçех спорт кăна пулмĕ.

Çапах та çав вăхăтра çамрăксен пуçĕнче спорт кăна пулнă-ха. Çур çулта вĕсем çĕнĕ программа хатĕрленĕ. 1982 çултанпа шăпах унпа тухнă та пăр çине.

### Пирвайхи çитĕнӳсем

Вĕсен пĕрремĕш тренерĕсем Владимир Захаровпа Надежда Шеваловская пулнă. Ĕç-пуç питĕ хăвăрт аталаннă, çамрăксем часах çитĕнӳпе палăрнă. 1985 çултах, виçĕ çулталăк иртсен, çамрăксем юниорсен хушшинче тĕнче чемпионĕ пулса тăнă. Совет Союзĕн чемпионатĕнче вара, унта тĕнчери чи пултаруллă фигуристсем тупăшнă, ултăмĕш вырăн йышăннă. Дебютантсемшĕн ку кăтарту питĕ чаплă шутланнă.

Мăшăрăн пултарулăхне асăрхаса вĕсене çав вăхăтри чи чаплă тренер Станислав Жук чĕнсе илнĕ. Шăпах вăл вĕрентсе пынипе Сергей Гриньковпа Екатерина Гордеева 1986 çулта пĕрремĕш хут тĕнче чемпионĕсем пулса тăнă. Çамрăк Катя çав вăхăтра 14 çулта кăна пулнă-ха. Тĕнче чемпионачĕшĕн ку – тĕлĕнмелли кăтарту. Çав таранччен ун пек çамрăк вăл шайри ăмăртусенче çĕнтерсе курман. Çав çулах çамрăксем Европа чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă, Совет Союзĕн чемпионатĕнче те кĕмĕле тивĕçнĕ.

Çулталăк иртнĕ. 1987 çулта спортсменсем тренера улăштарнă – Станислав Леонович патне куçнă. Çитĕнӳ нумай кĕттермен – хăйсем хутшăннă пур ăмăртура та çĕнтернĕ мăшăр: тĕнче чемпионачĕ, Европа первенстви, СССР чемпионачĕ... Çапла вара 1988 çулта иртмелли Олимпиадăна Гриньковпа Гордеева тĕп фаворитсем пек кĕтсе илнĕ.

### Вĕри туйăмсем

Ĕнтĕ Сергей 21 тултарнă, Катя – 17. Шăпах çак вăхăталла палăрма пуçланă та туйăмсем. Хĕрпе каччăна пĕрлештерсе тăраканни спорт кăна мар иккенне ыттисем те сисме пуçланă. Тен, шăпах çакă, чунсем пĕр килни, пулăшнă та çамрăксене малалла хăватлăн утмашкăн? Тен, шăпах вĕри туйăмсене пула çак мăшăр Олимпиадăра мĕнле çĕнтернине хăйсем те сиссе те юлайман? Питĕ çăмăллăн килнĕ çĕнтерӳ. Çакă кăсăклă. Мăшăр ирĕклĕ программăна "Мендельсон маршĕпе" тухнă. Çак номер фигуристсен тĕнче историне шедевр пулса çырăнса юлнă.

Çак кĕвве мăшăр тепĕр виçĕ çултан, пачах та урăх ларутăрура – хăйсен туйĕнче – итленĕ: мăшăр саккунлă майпа хут уйăрттарнă. 1991 çулхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕ ку. Çемье историйĕн пуçламăшне мăшăр чаплă çитĕнӳсемпе кĕтсе илнĕ – тăватă хут тĕнче чемпионĕсем. Анчах та шăпах çак вăхăталла вĕсем хăйсен пурнăçне



тата улăштарас тенĕ – спорта профессие çаврăнă. Мăшăр Татьяна Тарасова театрне куçнă. Унта та юратнă ĕçпех аппаланнă. Анчах та унта çакăншăн тата тӳленĕ те. Сахал та мар. 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче вара ку питех те пĕлтерĕшлĕ пулнă. 1992 çулхи Олимпиада та, çемьене укçа-тенкĕпе тивĕçтерес ыйтупа танлаштарсан, иккĕмĕш плана куçнă.

### Чикĕ леш енче

Çулталăкран çемьере йыш хушăннă, тĕнчене хĕр пĕрчи килнĕ, Дарья. Дарья ашшĕпе амăшĕ ку вăхăталла тăтăшах чикĕ леш енчи проектсене хутшăннă, комерци программи те нумай пулнă. Чун тасалăхĕшĕн, идеал шайĕнчи техникăшăн, унтан та ытла – иккĕшĕ пĕр-пĕрне питĕ юратнишĕн – вĕсене пурте питĕ хисепленĕ. Америкăра та, Канадăра та чи юратнă фигуристсем пулса тăнă вĕсем. Хушамачĕсен пĕрремĕш саспаллийĕсем тăрăх вĕсене хушма ят та панă – GG. Кун пек хушма ята американсем кино тата эстрада çăлтăрĕсене кăна парăççĕ.

### Медаль çыххи

Тепĕр çулталăк иртнĕ. Олимпиада халăхсен хушшинчи комитечĕ хăйсен йăлашне ăнланса илнĕ. Унăн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн спорта профессие çаврăнисене Олимпиадăна хутшăнма ирĕк паман-çке. Çакăн хыççăн устава кăштах çемçетнĕ. Каялла таврăнас текенсене 1994 çулхи куçăм ваййисене хутшăнма ирĕк панă. Гриньковпа Гордеева çак йышăнупа пĕр тăхтаса тăмасăр усă курнă. Тӳрех 1987 çулхи çĕнтерӳве тавăрнă – çĕршыв, Европа, тĕнче шайĕнчи чемпионатсенче çĕнтернĕ. Медальсен çыххине кĕçех Олимпиада ылтăнĕ хутшăннă.

### Инкек

Çакăн хыççăн мăшăр каллех профессие таврăннă, çамрăксене çул уçса пама шухăшланă. Аначах та... нумайлăха тăсăлман ку. 1995 çулхи чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче Сергей Гриньков Лейк-Плэсидра иртекен тренировка вăхăтĕнчех чĕрепе аптраса ӳкнĕ. Арăмне çӳлелле ывăтнă та... тытса ĕлкĕреймен, пăр çине йăваннă. Тытакан çуккине кура Катерина та упăшкипе пĕрлех кайса ӳкнĕ. Çапах та тăнă та хăвăртрах упăшки патне васканă. "Катя, мана питĕ япăх", чунран юратнă мăшăрĕн арăмĕ илтнĕ юлашки сăмахсем пулнă кусем. Инкек пулнă вырăна 1,5 минутран çитнĕ тухтăрсем арçынна нимĕнпе пулăшайман, диагноз кăна лартнă – инфаркт.

### Сергей

Ун тавраşĕнче яланах ырăлăх тапса тăнă. Шкулта та пĕртен-пĕр çитменлĕх кăна пулнă – арçын ача пичĕ çинчен йăл кулă кайма пĕлмен. Вĕрентекенсем çакна Сергей хăйсенчен кулать тесе ăнланнă, ашшĕ-амăшне тăтăшах шкула чĕне-чĕне илнĕ, воспитани енĕпе çителĕксĕр ĕçленĕшĕн хăтăрнă. "Воспитание" арçын ача хăй пурнăçланă – пӳлĕме хупăнса илсе тĕкĕр умне тăнă, йăл куллине çынран пытарма хăтланнă.

Тренерсен те унпа пĕр кăткăслăх кăна пулнă – ытла та хавaслă кăмăлĕ.

Сергейăн Катьăран уйрăм ӳкерттернĕ пĕр сăнӳкерчĕк те пулман – яланах пĕрле. Анчах та мăшăрĕн пĕрремĕш инфарктне арăмĕ те сиссе юлман. Тренировкăна ун чухне Сергей сулахай ури çине уксахласа çитнĕ. Çакна никам та пĕлтерĕшлĕ тесе шухăшламан – çурăмĕ ыратнине арçын маларах та калаканă. Анчах та мĕнле спортсменăн ыратмасть вăл?

Гринькова Николай атте пăр çинчех кĕлĕ вуласа юлашки çула ăсатнă. Хĕрарăмсем ăна тупăкпа киле илсе пыманшăн пăшăрханса калаçнă. Сергейăн амăшĕ вĕсене лăплантарнă: унăн килĕ – ЦСКА. Чăн та, Гриньков пурнăçĕнче спорт тата Катя кăна пулнă. Каярахпа унта Даша хутшăннă.

Гриньковпа Гордеева пăр çине пĕрле юлашки хут Моцартăн "Реквиемĕпе" тухнă...

### Пурнăçпа вилĕм хушшинче

1996 çулта Екатерина Гордеева пăр çине таврăннă. Таврăннă хыççăнхи пĕрремĕш номере вăл упăшкине халалланă. Сергей Гринькова асăнса иртнĕ кун арена тавра пушă пĕр вырăн та пулман. Екатерина "Пурнăç уявĕ" номер хатĕрленĕ, Густав Малерăн пиллĕкмĕш симфонийĕн сыпăкĕпе усă курса хатĕрленĕ композицие. Номер вĕçĕнче Катя куççульне чарса çитереймен... Амăшне лăплантарас тесе пăр çине унăн хĕрĕ, тăваттăри Даша, чупса тухнă.

"... Упăшкана пытарнă хыççăн иксĕмĕрĕн хваттерте эпĕ пĕр каç кăна çывăртăм. Унтан ытла тытăнса тăма пултараймарăм – асаилӳ ытла та нумайччĕ, чунчĕрене ытла та çунтаратчĕç вĕсем. Сергей çинчен шухăшлама та питĕ йывăрччĕ. Марина Зева тренер манăн вăхăта кашни минут таран çырса тухнăччĕ – музей, курав, концерт... Эпĕ унта çӳреттĕм, анчах та йĕри-тавра мĕн пулса иртнине ăнланмастăм та. Тавралăх пушанса юлнăччĕ. Çак пушăлăх майĕпен вĕлерсе пыратчĕ. Кашни ир пĕр шухăшпа вăранаттăм – мĕншĕн вăрантăмши? Мĕншĕн яланлăхах çывăрса кайма май çук-ши? Пăр çине таврăнас шухăш пуçра та пулман. Хĕрĕме пăхас ĕçе йăлтах анне хăй çине илчĕ. Вăлах çак шухăша та палăртрĕ – ахăртнех, спорт çинчен манма тивет. Укçа-тенкĕ енчен аптăраман эпир, мĕн ĕçлесе илни тепĕр вунă çул пĕр шухăшсăр пурăнма çитетчĕ. Ку енĕпе пирĕн менеджер та тăрăшатчĕ. Америкăра пирĕн ятпа мемориал фончĕ уçнăччĕ – унта çынсем укçа-тенкĕ куçарма пуçланăччĕ. Дашăпа иксĕмĕрĕн малашлăх Америкăра нумайăшне пăшăрхантарасси пирки шухăшлама та пултарайман эпĕ. Анчах та пурпĕр пурнăçас килместчĕ.

Çак лару-тăруран анне туртса кăларчĕ. Пĕррехинче вăл мана çирĕп сасăпа çапла каларĕ – ачана чĕрĕ кăна мар, сывă амăшĕ кирлĕ. Ниме пăхмасăр. Кĕтмен çĕртен çакна ăнланса илтĕм – мана пурнăçа каялла тавăрма пăр кăна пултарать. Пĕтĕм пурнăçăм та спорт тата Сергей пулнă. Пĕрне сухатрăм. Иккĕмĕшсĕр те тăрса юлмалла-и?

Хам мĕн тунине те ăнланмасăр хамăра венчете тăратнă, Дашăна тĕнĕ кĕртнĕ, Сергея юлашки çула ăсатнă май кĕлĕ вуланă Николай атте патне чиркĕве кайрăм. Вăл мана çапла каларĕ: "Телейлĕ пулма ан хăра. Ярăн. Шăпуна тĕл пулсан кунта илсе кил – хамах пиллесе венчет тăратăп сире". Ун патĕнчен тухсан лăплантăм. Пурнăçпа вилĕм пирки хам нимĕн те ăнланманнине туйса илтĕм...

Эпĕ нумай шухăшларăм – мĕншĕн-ха Турă мана Сергея питĕ кĕске вăхăтлăха кăна пачĕ? Ăна пытарнă чухне мана нумайăшĕ çак инкеке чунпа ниепле те йышăнайманнине, Сергей пирĕн хушăра текех çуккине ĕненме пултарайманнине каларĕç. Эпĕ вара çав самантра – пăр çинче – хама пачах урăхла туйăнăччĕ. Йăлтах манăн куç умĕнче, алăмра пулса иртрĕ-çке. Сергей вилнĕ чух вăл ман витĕр тухнине, чунăма йăлт пушатса хăварнине сисрĕм. Çакна та лайăх ăнлантăм: çак пушăлăх – яланлăхах..."
– çапла каласа кăтартнă каярахпа пĕр интервьюра Екатерина.

Пурнăç – малалла. Екатерина çакăн хыççăн пăр çине татах та тухнă, унăн урăх партнерсем те пулнă. Пурнăçра та пĕччен юлман хĕрарăм. 2001 çулта тепĕр хут качча тухнă. Тепĕр хĕр пĕрчине кун çути парнеленĕ. Анчах та спорта юратакансем ун çумĕнче хăйсен кумирне – Сергей Гринькова кăна – курнă. Пурăннă тăк вăл паян 49 çулта пулмаллаччĕ...

/Livejournal.com/.



Вовочка шкула пынă та вĕрентекене калать:

– Эпĕ текех сирĕн патра вĕренместĕп, Америкăна куçса каятăп!

– Мĕн пулнă, Вовочка?

– Акă Америкăра пурăнакан асаттерен çыру килчĕ – вăл суккăрланнă... Унăн вара – ферма, пилĕк завод, вунпилĕк лавкка... Халĕ ăна пулăшакан кирлĕ.

– Эсĕ аслаçуна çапла пĕлтер: куçман пĕтĕм пурлăхне суттăр, укçине Мир фондне куçартăр, хăй вара пурăнма кунта килтĕр. Эпир ăна класĕпех шефа илĕпĕр.

– Мария Ивановна, çырура ăнланмаллах çырнă-çке: вăл суккăрланнă, ăсран тайăлман!

* * *

**☺И-ХИ-ХИК☺**

– Арăм мана хирĕç санкци йышăнчĕ – халĕ макаронпа тата çăкăрпа кăна тăрантарать. Эпĕ те ăна хирĕçле санкци йышăнма шухăшларăм – кÿршĕ хĕрарăмĕ çине пăхкалама тытăнтăм.

– Усси пур-и?

– Мĕн усси? Пăхкалама пăхкалатăп-ха та, вăй çук вĕт...

* * *

Судья:

– Свидетель, 2006 çулхи ака уйăхĕн 16-мĕшĕнче 11 сехет те 42 минутра мĕн тунă эсир?

– Эпĕ-и? Ну... Кресло çинче алла календарь тытса сехет çине пăхса ларнă...

* * *

Виçĕ ачаллă арăмĕпе упăшки суда уйрăлма пынă. Пурлăха пайласа пĕтернĕ хыççăн пепкисен черет çитет. Арăмĕ те икĕ ачине хăйпе хăварма ыйтать, упăшки те. Вĕсем тавлашнине пăхса ывăнса çитнĕ судья ыйтăва хăвăртрах татса пама хистет.

– Юрĕ, – тет юлашкинчен хĕрарăм. – Атя çитес çул килетпĕр уйрăлма, ун чухне пирĕн тăватă ача пулĕ – шăпах сана иккĕ, мана та иккĕ...

* * *

– Тусăм, мĕн тери самăрălса кайнă эсĕ!

– Э, халĕ начарланнă-ха! Санăн мана уйăх каялла курасчĕ, вăт ун чухне эпĕ чăнласах та самăрччĕ – шăп та лăп сан пекчĕ.

* * *

Шалти ĕçсен пайĕнче ларатăп, ăнлантарса çырса пама ыйтаççĕ... Мĕншĕн эпĕ, ресторанран сыпкаласа тухнăскер, машина рулĕ умне ларса кайнă... Манăн ăçтан пĕлес? Эпĕ унта çуранах пынăччĕ вĕт...

* * *

– Чунăм, хамăн чĕреме парнелем-и сана?

– Хамăн нервăсене тавăрса пар-ха малтан...

* * *

Амăшĕ ташă каçĕнчен таврăннă хĕрне кĕтсе илет.

– Çитрĕн-им?!

– Çитрĕм!

– Мĕншĕн çак таранччен тытăнса тăтăн?

– Эсĕ вара пур больницăна та шăнкăравласа пăхрăн пулĕ-ха?

– Шăнкăравларăм!

– Пур морга та...

– Шăнкăравларăм!

– Ман пата вара мĕншĕн шăнкăравламарăн?

* * *

Каччă килне джиппа таврăннă. Паллах, ашшĕ-амăшĕн пĕрремĕш ыйтăвĕ – ăçтан тупăннă ку машина?

– Кÿршĕ урамра пурăнакан хĕрарăм 50 тенкĕпе сутрĕ, – ăнлантарать ывăлĕ.

Машина – 50 тенкĕлле? Тем ăнланмалла мар-ха кунта. Паллах, аслисем хайхи хĕрарăм патне васкаççĕ – мĕн пулса иртет?

– Пĕлетĕр-и, – ăнлантарать хĕрарăм. – Упăшка командировкăна тухса кайрĕ. Ĕнер вара унран çыру илтĕм. Урăххине тĕл пулнине, унпа юлма шухăшланине пĕлтерет, хăйĕн пĕтĕм пурлăхне сутма, укçине ăна куçарса пама ыйтать. Сăмах май, сире виçĕ пÿлĕмлĕ хваттер кирлĕ мар-и? Хакĕ – 100 тенкĕ кăна.

* * *

Арçынсем чăхă пекех: килтен çирĕм метр айккинерех пăрăнсанах – никамăн та мар...

* * *

Арçын путса вилме шухăшланă. Хайхискер кĕпер çине улăхса тăнă.

– Тăхтăр-ха, ан васкăр! – чупать ун еннелле пĕр хĕрарăм.

– Мĕн кирлĕ?

– Акă, пĕрле илĕр-ха, кушак çурисем унта, – арçын еннелле хутаç тăсать хĕрарăм.

* * *

Çемйипех дачăран таврăнаççĕ. Пиллĕкри хĕрача такам шыва кĕнине курать. Урамра вара сивĕ-ха.

– Манăн та шыва кĕрес килет! – кăшкăрать хĕр пĕрчи.

– Хальлĕхе сивĕ-ха, – ăнлантарма тăрăшать ăна амăшĕ. – Ку пиччесем эрех ĕçнĕ, вĕсене çавăнпа шăрăх пулса кайнă.

– Пирĕн мĕн, эрех çук-им? – тет хĕр пĕрчи.

* * *

Вăрманта – уяв. Пур чĕрчун та савăнăçлă, юрă юрлаççĕ, ташă ташлаççĕ... Инçех мар ÿсĕр, анчах та савăнăçлă упа шуса иртет:

– Тинех! Тавах, Турăçăм! Маша качча тухать!!! – пăшăлтатать вăл.

* * *

Подъезд умĕнче кинемейсем çамрăксене кăшласа лараççĕ – мораль енчен çирĕпех мар имĕш.

– Халĕ çырăнмасăрах арлă-арăмлă пурăнасси йăлана кĕрсе кайрĕ, – тет пĕри. – Пирĕн вăхăтра-и?! Эпĕ, калăпăр, упăшкана иккĕмĕш ачана çуратнă хыççăн кăна çывăха янă!

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӮСЕМ

АУ «Издательский дом «Хыпар»

**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**

НА 3, 6-7 ЭТАЖАХ

Дома печати.

Справки по телефонам: 28-83-64, 28-83-70, 56-04-17.

**ОКНА**
**пластиковые**
**Балконные рамы**
Пенсионерам скидки
Замер, доставка бесплатно.
**Т. 21-55-82,**
**8-987-577-89-63.**

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

40 çулти арçын 30-42 çç. хĕрарăмпа паллашасшăн. Т. 8-937-942-17-20.

### СУТАТĂП/ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. Песок, ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-960-307-31-51.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. Работаем без выходных. **Т. 8-960-307-31-51.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40, **полнотелые** 20х20х40. Доставка. Разгрузка. Т. 89603016374.

**7.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** торф, кирп. бой, чернозём, навоз. Дёшево. Доставка. Т.: 89033581770, 89276689713.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 89051990122.

**9.ГРАВМАССУ,** песок, **щебень, керамзит,** кирп. бой, чернозём. **Дёшево.** Доставка. Т. 89033583021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**13.Гравмассу, песок, керамзит,** бой кирпича. Д-ка. Т. 89033225766.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**15.Кирпич** любой. Т. 89613393363.

**16.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит – недорого. Т. 89053465671.

**21.Керамблоки, гравмас-су, песок.** Т.: 89033456307, 8-917-675-75-28.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Доставка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, колодезные **кольца.** Т. 89033468556.

**27.КИРПИЧ** от 10 руб., **БЛОКИ к/б,** пеноблоки. Манипулятор. Тел. 89033220208, 48-02-08.

**35.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ. Бесплатно:** замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. Т. 8-937-391-39-91.

**58.**Сетку-рабицу, заборы, **ворота** (кованые, распашные, гаражные), ДВЕРИ железные, **ОКНА** пластиковые. Кровля и обшивка домов. Козырьки, навесы. Строительные работы. Д-ка. Установка. Гарантия. **Льготникам скидки.** Т.: 89022881447, 387574. Сайт: metalservis21.ru

**76.Срубы** с комплектацией, липовые срубы, **каркасные дома** – на заказ. **Д-ка.** Т. 89379528467.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон,** раствор от производителя. Дешево. Без выходных. Т. 8-967-790-61-16.

**176.ГРАВМАССУ, песок, навоз** и т.д. Работаем – пн.-сбб. Доставка. Низкие цены. Т. 89278502821.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**305.Гравмассу, песок, щебень,** асфальт. **крошку,** торф, чернозём. Т.: 89093005705, 89196567752.

**311.Гравмассу, песок, щебень,** бой кирпича. **Д-ка.** Т. 89050282225.

**594.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 14000 руб., 3х8 – 18000 руб. Т. 8-917–666-80-20.

**595.ТЕПЛИЦЫ** от производителя по низким ценам. Т. 48-16-54.

**601.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка, недорого. Т. 89176776655.

### ПУЛĂШУ/УСЛУГИ

**36.Олег Боголюбов** маг, экстрасенс, хиромант, исправление судьбы. Поможет в решении семейных, финансовых проблем. Снятие любых порч и проклятий. **Т. 8-906-380-86-28.**

**38.Чистка колодцев, скважин.** Дост-м предметы. Т. 89674715070.

**43.Бурение скважин** «под ключ». Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**53.Изготовление ЛЕСТНИЦ** /дуб, хвоя, береза/. **Т. 8-917-662-34-94.**

**77.НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 89373972442.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 89063816037.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**500.КРОВЛЯ КРЫШИ,** плотницкие работы. Скидки. Т. 89373972442.

### ТУЯНАТĂП/КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Ĕне, вăкăр, тына, сурăх,** сысна амисем. Т. 8-937-014-49-97.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**574.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-961-348-91-88.

**575.Коров, бычков, тёлок, лошадей.** Т. 8-967-796-71-42.

**612.Закупаем ПОРОСЯТ** – 5-20 кг. Т. 8-967-791-89-05.

**614.СКОТИНУ.** Т. 8-961-344-03-82.

« ХЫПАР »
Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Е.М.АТАМАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службi 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07
Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 09.09.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 6736. Заказ 3215.